чăваш халăх хаçачĕ

1906 çулхи январĕн 21-мĕшĕнче тухма тытăннă 1918 çулхи февраль уйăхĕнчен тĕрлĕ ятпа тухнă 1991 çулхи августăн 30-мĕшĕнче "ХЫПАР" ятпа тепĕр хут тухма пуçланă

СССР Аслă Канашĕн Президиумĕ 1968 çулхи март уйăхĕн 11-мĕшĕнче "Коммунизм ялавĕ" /халĕ "Хыпар"/ хаçата "ХИСЕП ПАЛЛИ" орденпа наградăланă

ХЫПАР

"ХЫПАР" никĕслевçи Н.В.Никольский (1878–1961)

221/26627/ № Кĕçнерникун, 2014, ноябрь/чӳк, 13 Хакĕ ирĕклĕ www.hypar.ru

КУРАВ

Ĕненӳпе шанăç, хавхалану кӳрекен пулăм

Культурăпа çутĕç программипе те палăрса тăрать вăл

Шупашкар тата Чăваш митрополичĕн, Чăваш митрополи пуçлăхĕн Варнавăн пилĕпе ноябрĕн 12-17-мĕшĕсенче тĕп хулари МТВ центрта "Ӳкĕнӳрен Раççей чĕрĕлĕвĕ патне" ятпа Пĕтĕм тĕнчери православи курав-ярмăркки иртет. Кăçалхипе тăваттăмĕш хут килчĕ вăл Шупашкара. Йĕркелӳçисем – Чăваш митрополийĕ тата "Уральские выставки" Курав обществи /Екатеринбург/.

Курав ĕнер 12 сехетре уçăлчĕ. Шупашкар тата Чăваш митрополи пуçлăхĕ Варнава паллă пулăмпа пурне те – курав йĕркелӳçисемпе ĕненекенсене – саламларĕ, курав-ярмăркăна ăнăçлă ĕçлеме пил пачĕ. "Эсир кунта пĕрремĕш хут мар, ĕненекенсем сире яланах кĕтеççĕ. Тĕрлĕ регионтан илсе килнĕ турăшсене вĕсем пуç таяççĕ, хăйсене кирлĕ хатĕрсене туянаççĕ. Турă пулăшнипе ăнăçлă ĕçлемелле пултăр", – терĕ владыка.

"Уральские выставки" Курав обществин директорĕ Андрей Шварнев Чăваш çĕрĕ тăваттăмĕш хут йышăннишĕн кăмăллă Тата... хамăрăн ĕненекенсене Афонран пуçласа кĕрсе тухса çӳреме май çук чиркӳсен пуянлăхĕпе – çветтуйсен çĕрмен ӳчĕсемпе, Чĕрĕлĕх парса тăракан турăшсемпе – çывăхлатасси, паллаштарасси. Паян çакă питĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ.

Курав-ярмăркка ытти енĕпе те пуян: чиркӳре усă кураканăн япаласем, православи тĕнĕпе çыхăннă ювелир хатĕрĕсем, тумсем, сывлăха çирĕплетекен апатсем, пылпа унран хатĕрленĕ çимĕçсем, конфитюрсем, хĕвел тухăç пылакĕ, Грециренĕ илсе килнĕ олива çăвĕ, Кубань аш-пăшĕ тата ытти те.



Сергей Журавлев сăнӳкерчĕкĕ

КУРАВĂН ТĔЛЛЕВĔ ÇАПЛА: ХАЛĂХСЕНЕ ÇЫВĂХЛАТАССИ, ТУСЛĂ ПУРĂНМА ЙЫХРАВЛАССИ

пулнине палăртрĕ, пил панăшăн тав турĕ. Тата православи чиркĕвне аталанма майсем туса панăшăн, курава ăнăçлă ирттерме кĕлĕсем вуласа пулăшнăшăн Варнава митрополита "Уральские выставки" Курав обществин асăну медалĕпе чысларĕ.

Асăннă проект Раççейри, Беларуçри, Израильти, Грецири, Молдовăри, Украинăри Вырăс Православи Чиркĕвĕн 100 яхăн монастирне, храмне пĕрлештерет. Ĕненекенсем валли лайăх майсем туса панă: кунта – пурте хисеплекен турăшсем, вăл е ку çветтуйăн çĕрмен ӳчĕсем. Сăмахран, Аслă Елисавета княгиньăн çĕрмен ӳчĕллĕ савăчĕ, Чĕрĕлĕх парса тăракан турăш, çавăн пекех çветтуй Мускав Матронин, Петрпа Феврони Муромски çветтуйсен, Иоанн Предтечи çветтуйăн, Тĕлĕнтермĕш туса тăракан Николайăн /Николай Чудотворец/ тата чылай чиркӳри турăшсем пур. Кунтах сывлăхшăн тата çӳлти тĕнчене кайнисене асăнма саккас пама май пур. Çак мелпе усă кураканăн ыйтăвне Вырăс çĕрĕн кирек хăш кĕтесĕнче те тивĕçтереççĕ. Куравăн тĕллевĕ çапла: халăхсене çыхăнтарасси, туслă пурăнма йыхравласси.

Курав хăйĕн культурăпа çутĕç программипе те палăрса тăрать. Кулленех кунта пачăшкăсем каласусем ирттерĕç, ĕненекенсене канăçсăрлантаракан ыйтусен хуравĕсене тупма пулăшĕç, православи фильмĕсене кăтартĕç, пултарулăх коллективĕсен концертĕсем иртĕç. Çапла майпа пуçтарăннă нухрат курава йышăнакансен пурлăх хăватне ӳстерме кайĕ.

Куравпа паллашнисен, ĕненекенсен шухăшĕсене те пĕлес килчĕ.

Татьяна:

– Çулленех чăтăмсăррăн кĕтетĕп пиншер çухрăма хыçа хăварса килекенсене. Чиркӳсенче сăвапланă япаласене туянатăп та пĕр хушă канлĕ пурăнатăп, унтан каллех кĕтме пуçлатăп. Тавах владыкăна, сывлăх сунатăп ăна.

Галина:

– Çветтуй вырăнсене çитсе курнăнах туятăп пĕр чиркӳрен тепĕр чиркӳ патне утнă май. Кун чухлĕ турăш тата хăçан пĕрле пуçтарăнĕç? Ĕненӳпе, шанăçпа, хавхаланупа килетĕп кунта.

■ **Надежда СМИРНОВА**

Пахалăх тата хăрушсăрлăх ыйтăвĕсемпе

Ноябрь уйăхĕн 13-мĕшĕнче Пĕтĕм тĕнчери пахалăх кунне паллă тунă май Роспотребнадзорăн Чăваш Республикинчи управленийĕ çак уйăхăн 10-14-мĕшĕсенче тавар тата пулăшу пахалăхĕпе, хăрушсăрлăхĕпе çыхăннă ыйтусемпе телефонпа консультаци парать. Граждансем асăннă учреждение 9-17 сехетсенче – (8352) 58-27-27, 58-50-79, 58-39-16, "Чăваш Республикинчи – Чăваш Енри гигиена тата эпидемиологи центрĕ" ФБУЗ çумĕнчи консультаци центрне (8352) 56-46-66, 56-29-01 телефонсемпе шăнкăравлама пултараççĕ.

Хисеплĕ Вулаканăмăр!

Эс пĕлен: «Хыпар» Издательство çурчĕн кунçулĕнче çĕнĕ тапхăр пуçланчĕ. Вăхăт пире çĕнĕлле пурăнма, çĕнĕлле ĕçлеме хистет. Эпир сан шанчăкна тӳрре кăларма тăрăшăпăр, эс вара пирĕн кăларăмсене, тархасшăн, çырăнсам.

«Хыпар»: Вулаканăм, пĕр çулпа утар!

Кăларăмсем		Индекс	Почта уйрăмĕсенче	«Чăваш пичет» киоскĕсенче	«Советская Чувашия» киоскĕсенче	Редакцире
Хыпар	ХЫПАР	54800	732,66	288	279	144
Хыпар-шăматкун	ХЫПАР	78353	304,08	150	141	90
Çамрăксен хаçачĕ	Çамрăксен	54804	358,08	234	231	144
Чăваш хĕрарăмĕ	Хĕрарăмĕ	11515	325,08	222	213	141
Сывлăх	Сывлăх	11524	205,02	114	111	81
Кил-çурт, хушма хуçалăх	Кил-çурт	54806	184,04	114	111	81
Хресчен сасси	Хресчен сасси	54838	376,62	168	162	114
Хресчен сасси–кил	Хресчен сасси	43887	184,08	108	105	81
Тăван Атăл	Тăван Атăл	11529	319,08	252	246	198
Капкăн	Капкăн	24608	185,04	150	126	108
ЛИК	ЛИК	83429	140,36	120	120	100
Тантăш	Тантăш	54802	274,08	138	132	90
Самант	Самант	73208	181,02	162	156	120
Тетте	Тетте	73771	143,52	114	111	90

ПРАВИТЕЛЬСТВĂРА

Бюджет: тупăш та, тăкаксем те пысăкланнă

Республика Правительствин ĕнер Иван Моторин премьер ертсе пынипе иртнĕ ларăвĕн кун йĕрки самай анлă пулчĕ – 32 ыйту. Çапах вĕсене кал-кал тишкерчĕç, тавлашма, сасă хăпартма хистекен самантсем пулмарĕç.

Ларура хула тăвас ĕçе йĕркелесе пырасси, тӳлевсĕр юридици пулăшăвĕ кӳресси, муниципалитетсен çурт-йĕр тĕрĕслевĕ çинчен калакан саккунсене улшăнусем кĕртессине ырларĕç, финанс министрĕ Светлана Енилина хăй ертсе пыракан министерство ĕçĕ çинчен отчет турĕ – такăнтаракан «тумхахсем» пулмарĕç темелле.

Светлана Александровна çавăн пекех республикăн 2014 çулхи бюджетне мĕнле пурнăçланипе паллаштарчĕ. Отчета Патшалăх Канашĕнче те тишкерĕç. Министр палăртнă тăрăх – ноябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне республика бюджетне тупăш тĕлĕшпе 30,3 млрд яхăн тенкĕлĕх пурнăçланă. Иртнĕ çулхи çак вăхăтрипе танлаштарсан çак виçе 2,9% пысăкланнă. Çав шутра хамăрăн тупăш та ӳсĕмлĕ – 3,6%. Тăкаксене илес тĕк – вĕсем те 30,3 млрд тенке яхăн. Ку кăтарту пĕлтĕрхи çак тапхăртинчен чылай пысăкрах – 9% чухлех. С.Енилина республикăн тăкак обязательствисене укçа-тенкĕне тивĕçтерессине вăхăтра пурнăçласа пынине пайăррăн палăртрĕ.

Ыйтусем те пулчĕç. Калăпăр, тупăшсен ӳсĕмĕ мĕнпе сăлтавланнă? Министр хуравне пĕлет: ĕç укçи ӳснĕ май налук тата налук мар тӳлевсем ытларах кĕреççĕ, сийĕнчен тивĕçлĕ органсем предприятисемпе организацисем асăннă тӳлевсене туллин тата вăхăтра хывнине тĕрĕслесех тăнин витĕмĕ те пур. Темăна пĕтĕмлетнĕ май Правительство пуçлăхĕ И.Моторин 4-мĕш квартал укçа-тенкĕ енĕпе çуллех çивĕч пулнине аса илтерчĕ, çавна май çулталăка вĕçленĕ чухне ку енĕпе пушшех тимлĕ ĕçлемелле.

Муниципалитет районĕсен ял хуçалăхĕнчи экономика ăмăртăвĕ çинчен йышăну турĕç. Районсем виçĕ зонăна пайланса тупăшĕç, документра çĕнтерӳçĕсене укçан хавхалантарассине палăртнă. Культура учрежденийĕсем валли те укçа пулĕ. Муниципалитетсене 400-шер пин тенкĕ парассине çирĕплетрĕç. Чăн та, премьерăн ыйту çуралчĕ: «Улатăр хулине мĕншĕн кӳрентеретĕр – укçа паман?» Культура министрĕ Вадим Ефимов пĕлтернĕ тăрăх – Улатăра маларах 3 млн тенкĕ панă, çавăнпа та кӳренме сăлтав çук.

2016 çулта Шупашкарта хăвăрт утакансен командисен тĕнче чемпионатне хатĕрленсе ирттермелли мероприяти планне çирĕплетрĕç. Спорт министрĕн тивĕçĕсене пурнăçлакан Алексей Яковлев аса илтерчĕ: çак чемпионата çине-çинех икĕ хут пĕр хулара ирттермелли йышăнава пуçласа тунă. Шупашкара шанаççĕ, эппин, çак шанăça тӳрре кăлармашкăн çине тăрса ĕçлемелле.

Районсемпе хуласен инвестици илĕртӳлĕхĕн рейтингне палăртмалли критерисене тишкернĕ май вĕсенчен хăшĕсем тивĕçтерменни пирки Патшалăх Канашĕн комитечĕн ертӳçи Петр Краснов сăмах хускатрĕ. Асăннă критерисен шутĕнче пысăк предприятисен ĕç кăтартăвĕсем те пур. Анчах хăш-пĕр районта унашкал предприяти 1-2 кăна е пачах та çук, апла тăк çак критери районсене пĕрешкел виçепе хаклама май памасть. Тепĕр самант: хăш-пĕр районта çын пуçне 6-7 пин тенкĕ налук пухаççĕ, тепринче – 3-4 пин кăна. Çакна та шута илмелле. Петр Степанович шухăшĕпе – «муниципалитетăн пĕтĕмĕшле продукчĕ» текен ăнлавпа усă курма пуçламалла. Хăш-пĕр региона вăл пур та ĕнтĕ. Паллах, кун валли тивĕçлĕ методикăсем кирлĕ – тӳрех пулакан ĕç мар. Асăрхаттарусем пуррине кура Правительство членĕсем вĕсене шута илсе йышăнава кăшт каярах çирĕплетес терĕç.

Лару Правительствăн маларах тунă хăш-пĕр йышăнавне улшăнусем кĕртнипе вĕçленчĕ.

■ **Николай КОНОВАЛОВ**

КУН хыççăн КУН

☎ 56-04-26, 28-82-91

Граждансене – çĕнĕ çурт-йĕр

Ноябрĕн 10-мĕшĕнче ЧР Правительствин Председателĕ Иван Моторин РФ строительство министрĕ Михаил Мень видеоконференци мелĕпе ирттернĕ пĕтĕм Раççейри селектор канашлăвне хутшăннă. Унта федераци субъекчĕсенче граждансене юхăннă çуртсенчен куçарас ĕç мĕнле пынине пĕтĕмлетнĕ.

М.Мень палăртнă тăрăх – 2014 çулта çĕршывра пĕтĕмпе 211 пин çынна кивĕ çуртсенчен куçармалла. Чылай регион ку енĕпе ăнăçлă ĕçлет. Анчах юлса пыраканнисем те пур. Вĕсен шутĕнче – Тверь, Тула, Иваново, Волгоград облаçĕсем, Коми, Дагестан республикисем тата ытти.

Чăваш Енре программăпа килĕшӳллĕн 13,2 пин çынна куçармалла. Халĕ программăн пĕрремĕш тапхăрне пурнăçлаççĕ, кăçал 3,03 пин çынна çĕнĕ хваттерсемпе тивĕçтермелле. Çĕнĕ çуртсен пысăк пайне декабрьте хута ярĕç.

Н.СМИРНОВ.

Подстанци те çук, укçа та

ЧР прокурорĕн пĕрремĕш çумĕ Виталий Щетинкин 39 çулти Сергей Баталыгин тĕлĕшпе пуçарнă уголовлă ĕçпе айăплав пĕтĕмлетĕвне çирĕплетнĕ. Ăна уйрăмах пысăк виçепе улталанăшăн айăплаççĕ.

Следстви версийĕпе килĕшӳллĕн Баталыгин Шупашкарти «Инженери центрĕ» НПП» ООО директорĕ пулнă май «Сорочинскри çу экстракчĕн завочĕ» ООО ертӳçисене улталанă. Оренбург облаçĕнчи çав предприяти валли электроподстанци тата электролини тăватпăр тесе Инженери центрĕн шучĕ çине куçарнă 110 млн яхăн тенке вăрланă.

Следстви вăхăтĕнче тулли мар явапла юлташлăхăн 120 млн ытла тенкĕлĕх пурлăхне арестленĕ. Республика прокуратурин пресс-служби пĕлтернĕ тăрăх – уголовлă ĕçе Шупашкарти Ленин районĕн судне тишкерме ярса панă ĕнтĕ. Баталыгин вунă çуллăха ирĕклĕхсĕр юлма, ăна 1 млн таран тенкĕлĕх штрафлама пултараççĕ.

Н.КОНОВАЛОВ.

Пултаруллă ентешсене Мускавра чысланă

РФ Культура министерстви Пĕтĕм Раççейри "Ӳнер шкулĕн чи лайăх вĕрентекенĕ" конкурса пĕтĕмлетнĕ. Çĕнтерӳçĕсемпе лауреатсене Мускаври чи чаплă учрежденире – Пысăк театрта – чысланă.

Сумлă ята тивĕçнисен йышĕнче пирĕн ентеш те пур. Вăл – Шупашкарти С.Максимов ячĕллĕ музыка шкулĕн преподавателĕ, РФ культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ Анжелика Сидорова. Маттур вĕрентекене лауреат дипломĕпе РФ культура министрĕн çумĕ Григорий Ивлиев наградăланă. Пĕр кун маларах Гнессинсем ячĕллĕ музыка академийĕнче "Раççейĕн çамрăк таланчĕсем" конкурсăн хастарĕсене парнесемпе савăнтарнă. Тĕлĕнмелле те: кунта та Анжелика Сидоровăн вĕренекенĕсем палăрнă. Пĕтĕм тĕнчери тата çĕршыври чылай конкурсра мала тухнă Ульяна Самохинăпа Захар Анисимовăн ăсталăхне жюри членĕсем пысăк хак панă.

Е.АНДРЕЕВ.

Музейра – лĕпĕшсем

Вăрнарти музейра чĕрĕ лĕпĕшсен куравĕ ĕçлет. Вăл кураканнисемшĕн, уйрăмах ачасемшĕн, питĕ кăсăклă. Çак кунсенче аваллăх управçин директорĕ Елена Шарипова илемлĕ лĕпĕшсемшĕн "анне" пулса тăнă. Вăл вĕсене çитерет, ĕçтерет, çĕнĕ "ăрава" та йышăнать. Музейра çĕр чăмăрĕ çинчи чи пысăклĕпĕш – павлиноглазка атлас – çут тĕнчене килни тĕлĕнтермĕш мар-и вара?

Çак лĕпĕш çунаттисене 25 сантиметр тăршшĕ сарать. Вара вăл çĕлен пуçне аса илтерет. Шел те, çак чиперккесем çут çанталăкра нумай пурăнмаççĕ. Вĕсен тăван çĕршывĕ – Инди, Индонези, Малайзи тата Китай. Амисем açисенчен пысăкрах. Пысăк лĕпĕшсем çĕрле хастар. Çавăнпа вĕсем "Тĕттĕмлĕх кнеçĕ" ята тивĕçнĕ. Ами тата та сахалрах пурăнать-мĕн: вăрлăх сапнă хыççăнах вилет. Тайваньре павлиноглазкăсем çынна усă кӳреççĕ: хурт коконне (кипкине) вĕсем енчĕк вырăнне усă кураççĕ.

С.ИВАНОВА.

Татьяна Николаева çĕнтернĕ

Патăрьелти культурăпа кану центрĕнче "Чăваш пики - 2014" конкурс иртнĕ. Йăлана кĕнĕ çак мероприятие пултаруллă çамрăксене тупса палăртас, чăваш халăх культурине, йăли-йĕркине упрас, ялсенчи яш-кĕрĕмпе хĕр-упраç хушшинчи социаллă тата культура çыхăнăвĕсене аталантарас тĕллевпе йĕркеленĕ.

Конкурсра "Асанне арчи" театр кăтартăвĕ те пулнă. Чиперккесем "Тăван ен, тăван тавралăх" слайд-шоупа усă курса хăйсен ялĕсенчи йăла-йĕркепе паллаштарнă. "Асанне арчи" конкурсра вара чăваш наци тумне пĕлнине туллин уçса панă. "Чăваш апачĕ" тупăшура пулас кил хуçи хĕрарăмĕсем тутлă апат хатĕрлес енĕпе "вăй виçнĕ". Тĕрлĕ ял тăрăхĕнчен пухăннă пикесем çавăн пекех юрлас, ташлас ăсталăхпа та савăнтарнă. "Вице Чăваш пики" номинацире Чăваш Ишекĕнчи Светлана Максимова çĕнтернĕ. "Чăваш пики -2014" ята Патăрьелти Татьяна Николаева тивĕçнĕ.

А.ГРОМОВА.

Çанталăк çинчен

Паян улшăнса тăракан пĕлĕтлĕ çанталăк пулать, вырăн-вырăн çумăр çăвать. Çил анăçран 1 метр хăвăртлăхпа вĕрет. Сывлăш температури **кăнтăрла 3, çĕрле 2 градус ăшă.** Атмосфера пусăмĕ 760 мм, сывлăшри нӳрĕк 94 процент.

Кун тăршшĕ 8 сехет те 23 минут.

УЯВ

Яваплăха туйса, çынлăха çухатмасăр

«Вăйлă пулни, яваплăха туйни кăна çителĕксĕр, йĕркелĕх хуралçишĕн çынлăх та кăтартуллă пулмалла», – çапларах палăртнă Елчĕк районĕнчи Кивĕ Эйпеç шкулĕнче вĕренекен Настя Сусметова ЧР Шалти ĕçсен министерствин общество канашĕ йĕркеленĕ конкурса хутшăнса çырнă сочиненийĕнче. Килĕшсемĕр, право хуралĕн çак органĕн тивĕçĕсен тĕп тĕшшине палăртнă вĕт. Туртикун полицейскисем тĕп хулари Операпа балет театрĕнче хăйсен професси уявне паллă турĕç те – пакунлă çынсен ĕçне хаклакан ăшă сăмахсем янăрарĕç.

Шалти ĕçсен министрĕ Сергей Семенов палăртнă тăрăх – республикăра кăçал пысăк пĕлтерĕшлĕ ĕç чылай пулчĕ – çĕршыв Президенчĕ Владимир Путин хутшăннипе иртнĕ спорт форумĕ таранах. Полици айккинче тăман – йĕркелĕхе тивĕçтерме ăна кашнинчех явăçтарнă. «Пăтăрмахсем пулман, çакăнта сирĕн тўпе те пысăк. Республикăри пĕтĕмĕшле ларутăрушăн та тăнăçлăх кăтартуллă», – тав туса палăртрĕ министр. Преступленисене уçса парас енĕпе те лайăх ĕçлени куç кĕрет: ку енĕпе Чăваш Ен полицийĕ Атăлçи округĕнче лидер шутланать.

Çакна çирĕплетекен ăнăçлă тĕслĕхсене те асăнчĕç. Çав шутра – «хура риелторсен» ушкăнне сиенсĕрлетни, банкоматсенчен укçа вăрлакансене тытса чарни, автосалонран машинăсем вăрланă çынсене тупса палăртни тата ытти те. 14кг ытла наркотик хутăшĕсем туртса илнĕ, экономикăри пысăк сиен кўнĕ преступленисене уçса панă... Çавна май патшалăх полицие тĕревлесе пурнăçлакан ĕç те – тивĕçлипех. Кăçал Чăваш Ен ШЕМĕ 94 единица транспорт илнĕ. Медсанчаçе çĕнетнĕ. Министерствăн çĕнĕ корпусне тума пуçлаççĕ. 19 сотрудникне çурт-йĕр туянма укçа панă. Пурăнмалли çурт çĕкленĕ те – 63 çемье çĕнĕ хваттерсем илнĕ.

...Пысăк экран çине полицейскисен хушамачĕсемпе сăнўкерчĕкĕсем пĕрин хыççăн тепри тухаççĕ: Олег Коновалов, Николай Поручиков, Александр Егоров, Леонид Пучков... Çурçĕр Кавказра служба тивĕçĕсене пурнăçланă май вилнĕ Чăваш полицейскийĕсем. Чуна çурасла кĕвĕ янăрать. Зал ура çине тăчĕ. Кашнин куçĕсем шывланчĕç... 1995 çултанпа Çурçĕр Кавказра ЧР ШЕМĕн вунă сотрудникĕ пуç хунă...

Чăваш Ен полицийĕн 6,5 пин çынран тăракан пысăк йышне уяв ячĕпе ЧР Министрсен Кабинечĕн Председателĕ Иван Моторин, федерацин республикăри тĕп инспекторĕ Геннадий Федоров, ыттисем саламларĕç. Паллах, награда та нумай пулчĕ */сăнўкерчĕкре/.* Чыса тивĕçнисен шутĕнче – рядовойран пуçласа полковник таран: Дмитрий Кузнецов, Михаил Трифонов, Алексей Лазарев, Валерий Смирнов, Сергей Столяров тата ыттисем.

Уяв концертпа вĕçленчĕ. Профессионал артистсене те чĕннĕ, анчах полицире хăйĕнче те вокал енĕпе вĕсенчен юлманнисем пайтах. Пакунлă юрăçсем те сцена çине тухрĕç – мĕнлерех юрлаççĕ! Залри ĕçтешĕсем вĕсене тăваллăн алă çупса тав турĕç. Тепĕр самант вара çак йĕркесен авторĕшĕн пушшех кĕтменлĕх пулчĕ. ШЕМĕн общество канашĕн ертўçи Игорь Кустарин /ЧР Суту-илўпе промышленноç палатин президентне кашниех пĕлет-тĕр/ тĕлĕнтерсех ячĕ: гитара калама та, юрлама та ăста иккен! Предпринимательсене явăçтарса «Кустаринăн рок ушкăнне» йĕркеленĕ – вăл та пакунлă çынсене хăйĕн юрри-кĕввипе савăнтарчĕ.

■ **Николай КОНОВАЛОВ**

ПУБЛИЦИСТ ШУХĂШĔ

Малашлăха йыхравлакан маяк

Ноябрĕн 16-мĕшĕнче кăвар чĕреллĕ поэтăмăр Çеçпĕл Мишши çуралнăранпа 115 çул çитет. Çак сăвăçа чăваш чĕлхин шăпи питĕ шухăшлаттарнă. Тăван сăмах, чĕлхе пĕлтерĕшĕ пирки вăл çапла çырнă: «Вăхăт çитĕ. Чăваш чĕлхи те тимĕр татĕ. Çивĕч пулĕ. Хĕртнĕ хурçă пек пулĕ. Вăхăт çитĕ – чăваш юрри те илтĕнсе кайĕ. Таса пĕлĕте, çут тĕнчене, хĕрлĕ хĕвеле савса юрлĕ вăл. Чăваш юрринче таса пĕлĕт çумĕнчи тăри юрри илтĕнĕ. Чăваш юрринче тинĕс хумĕ шавлĕ, вăрман кашлĕ, вĕçĕ-хĕррисĕр улăхсем симĕсленсе выртĕç. Авалхи хуйхă сасси илтĕнмĕ, телей куç умне тухса тăрĕ. Атăл хĕрри тăрăх тĕнче кĕсле сассипе янраса тăрĕ – çакă чăваш юрри пулĕ. Чăваш чĕлхи кăвар пулĕ, хĕрнĕ хурçă пулĕ!»

Çĕршывăмăр хăюллăн вăранасса кĕтĕм, шаннă поэтăмăрăн пĕтĕм кунçулĕ хăйĕн тăван халăхĕн пурнăçĕпе çыхăннă. Иртнĕ саманара та кун кунлама тивнĕскер унăн тути-масине лайăх активсе курнă вăл. Ырри унпа юнашарах çўреймен. Çавăнпа та çĕнĕ улшăнусем çĕнĕ варкăш илсе килессе кĕтнĕ. Кĕтнĕ çеç мар, уншăн кĕрешнĕ те. Анчах çĕнĕ самани те унăн çутă, таса ĕмĕтне тўрре кăларайман. Поэтăн чунĕ татах аслă тинĕс пек хумханать, тăвăлать, ахăрать... Çук, каялла чакмасть Çеçпĕлĕмĕр. Кĕрешў вăйне анчах кăмăллать ун вутлă чунĕ. «Çĕн тĕнче; Эй çĕнĕ кунăм, Каялла ан кай, ан чак!» – тет вăл «Тинĕсе» саввинче. Çак йĕркесене вулатăн та куç умне çирĕп кăмăллă, темле асапнушара та пуçа усма кирлĕ маррине аса илтерсе тăракан чăн-чăн çын тухса тăрать. Чăваш халăхĕн маякĕ, çул кăтартса малалла чĕнекен символĕ.

Поэтăмăрăн сăмахĕсем шухăша яраççĕ. Пурнăçа кĕрейнĕ-ши вĕсем, çапла пултăр тесе эпир хамăр енчен мĕн турăмăр-ха?

Историрен çакă паллă. 1917 çулхи революцисем /февральти тата октябрь уйăхĕнчи/ хыççăн Раççейри «вак» халăхсен чĕлхисем аталаннă икĕ тапхăр пулнă: наци интеллигенцине аркатнă репрессиченхи 10-15 çул; çĕнетў çулĕсем. Малтанхи тапхăрăн пуçламăшĕ шăпах Çеçпĕл Мишшипе çыхăннă. Ирĕке тухнă халăхсем /çав шутра чăвашсем те/ хăйсен тăван чĕлхисене хăватлăн аталантарма пуçланă. Патшалăх Чĕлхе политикине ăнăçлă тытса пынă. Чăваш чĕлхипе патшалăх тытăмĕнче те анлăн усă курнă.

Çĕнетў çулĕсем пирки çакна палăртмалла: çак тапхăрта тăван чĕлхе çĕнĕрен вăй илчĕ. Сăмахран, Чăваш Республикин «Чĕлхесем çинчен» саккунне йышăннă, Наци конгресĕ йĕркеленнĕ, хула шкулĕсенче чăваш чĕлхипе литературине вĕрентме пуçланă... Аса илер: Чăваш чĕлхин кунне те шăпах çав çулсенчи – 1992 çулхи апрелĕн 9-мĕшĕнчи – йышăнупа килĕшўллĕн паллă тума пуçланă. Кунне те ăнăçлă суйласа илнĕ: апрелĕн 25-мĕшĕ – халăхăмăра çутта кăларнă Иван Яковлевăн çуралнă кунĕ.

«Чĕлхесем çинчен» саккун та, чĕлхене аталантармалли программа та пур пирĕн. Вĕсене пурнăçа кĕртсен нимĕнле çивĕч ыйту та пулмалла мар темелле. Анчах çапла-и-ку?

Юлашки çырав кăтартăвĕсене илсе пăхар-ха. Унпа килĕшўллĕн Раççейре 1435 пин чăваш пурăнать. Çав шутран 300 пине яхăн йăхташ хăй чăвашла пĕлнине кăтартман. Апла пулсан 1135 пин чăваш кăна тăван чĕлхепе калаçать.

Наци шăпи, патшалăхăмăрăн малашлăхĕ тўрремĕнех халăх йышĕпе-шучĕпе çыхăннă. Çакă пысăк пĕлтерĕшлĕ, мĕншĕн тесен чĕлхене çухатса вырăсланас туртăм халĕ те вăйлă. Конституци прависемпе туллин усă куракан, наци культурине, чĕлхесене, искусствине тата халăх йăли-йĕркине упрама-аталантарма ăнтăлакан чăваш халăхĕн пĕртен-пĕр патшалăхĕ – Чăваш Республики. Чăваш Ен хăйĕн республика статусне аталантарса пырсан çеç халăхăн ăс-хакăл çăлкуçĕсем типсе лармĕç, вĕсем ытти регионта пурăнакан чăвашсене чĕрĕлĕх вăйне парса тăрĕç. Çавăнпа та эпир ыран, малашне, çитес ĕмĕрсенче мĕнле пуласси пĕтĕмпех хамăртан, патшалăх чăваш халăхĕн пуласлăхĕ çине мĕнле пăхниннчен килет.

Ман шутпа, эпир Çеçпĕл Мишшин çăлтăрĕ патне çĕкленме пуçларăмăр çеç-ха. Ăна ăнланас, унăн тĕнчине «кĕрес» тесен пирĕн ĕçлемелле те ĕçлемелле. Малашлăха йыхравлакан маякăн çути чăваш халăхĕн малашнехи пĕтĕм кун-çулĕнче çутăрах тутăр.

■ **Надежда СМИРНОВА**

САМАНА ТАППИ

90 çул – мăнаçланмалли нумай

«Фармация» ПУП, республикăри чи пысăк аптека сечĕ, 90 çулхи юбилейне паллă турĕ. «90 çул вăл – мухтанма юракан ўсĕм. Паян пире опытшăн, шанчăклăхшăн тата ят-сумшăн шанаççĕ», – терĕ уявра Валерий Филимонов генеральнăй директор. Вăл – РФ тата ЧР сывлăх сыхлавĕн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ, предприятие пĕр улшăнми 20 çул ертсе пырать.

Реклама

● *Уяв саманчĕ.*

«Фармация» ПУП историйĕ пуян та кăсăклă. 1924 çулта Чăваш облаç ĕçтăвкомĕн Президиумĕн йышăнăвĕпе килĕшўллĕн Шупашкар, Сĕнтĕрвăрри, Çĕрпў тата Етĕрне аптекисен, çавăн пекех Йĕпреçри тата облаçăн аптека склачĕсенчен /унăн хăйĕн лабораторийĕ, виççе чĕркекен уйрăм пулнă/ никĕсĕ çинче «Чăвашмедторг» предприяти туса хунă. Штат 96 çынран /çав шутра 22 специалист/ тăнă. Пĕрлехи предприяти йĕркелени экономика йывăрлăхĕсене пăхмасăр сиплĕ ўсентăран хатĕрлессине ўстерме, халăх эмелсем туянассине лайăхлатма май панă. 1929 çул пуçламăшĕнче «Чăвашмедторг» предприятирен ЧАССР Сывлăх сыхлавĕн наркомĕн Чăваш аптека управленийĕ туса хунă. 1936 çулта вăл РФ Сывлăх сыхлавĕн наркомĕн Тĕп аптека управленийĕн /ТАУ/ Чăваш уйрăмĕ пулса тăнă. Малашнехи тĕллевсене пурнăçа кĕртмешкĕн республикăра фармацевтсем çитменни чăрмантарнă. 1936 çулта предприяти специалисчĕсем хутшăннипе, Сывлăх сыхлавĕн наркомĕн йышăнăвĕпе Шупашкарти фармацевтика шкулне уçнă. Çак шкул 1952 çулччен ĕçленĕ, аптекăн вăтам сыпăкри 900 яхăн специалистне хатĕрленĕ. 1959 çулта – черетлĕ реорганизаци, çавăнтанпа ЧАССР Сывлăх сыхлавĕн министерствин Аптека управленийĕ малалла аталаннă: çĕнĕ аптекăсем уçнă, складсем хăпартнă, производство базисене анлăлатнă. 1968 çулта Аптека управленийĕ ЧР Министрсен Канашне пăхăнма пуçланă.

1988 çулта предприятие каллех çĕнетсе улăштарнă, ЧАССР Сывлăх сыхлавĕн «Фармация» производство пĕрлешĕвне туса хунă. 90-мĕш çулсенче районсен аптекисенчен чылайăшĕ юридици сăпачĕн статусне илнĕ. 2009 çулта ЧР Правительствин постановленийĕпе килĕшўллĕн ЧР Сывлăх сыхлавĕпе социаллă аталану министерствин «Фармация» ПУПне районсенчи 26 аптекăпа пĕрлештернипе çĕнетсе улăштарнă. «Пирĕн умĕнхи ĕçтешсем тĕлĕнмелле кăсăклă, çав хушăрах йывăр та кăткăс çула утса тухнă. Вĕсем 20-мĕш çулсенче аптекăсене национализациленине курнă, çĕнĕ экономика политикине /НЭП/ хутшăннă. Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи вăхăтĕнче хăйсене шеллемесĕр ĕçлесе, чылайăшĕ тăшманпа кĕрешсе Çĕнтерĕве çывхартма тăрăшнă. Вăрçă хыççăнхи çулсенче ыттисемпе пĕрле халăх хуçалăхне çĕкленĕ, çынсем чирлессине тата вилессине чакарма ăнтăлнă, ўсен-тăранран чĕр тавар хатĕрленĕ. Çĕнĕ аптекăсем, складсем, ĕçченсем валли çуртйĕр хăпартнă, тĕрлĕ ăмăртăва хутшăннă. Пирĕн предприятири 3 çынна – Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав, пĕрне – «Халăхсен туслăхĕ», 6 çынна «Хисеп Палли» орденсемпе наградăланă. 3 фармспециалист «Раççей Федерацийĕн сывлăх сыхлавĕн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ» ята, 40-шĕ «Чăваш Республикин сывлăх сыхлавĕн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ» ята тивĕçнĕ. 100 ытла специалист сывлăх сыхлавĕн отличникĕ пулса тăнă. Пĕтĕмĕшле илсен 90 çул хушшинче тĕрлĕ должноçра вуншар пин çын ĕçленĕ, вĕсенчен кашнин – хăйĕн шăпи, историйĕ. Пирĕн тĕллев – пуян çак еткере сыхласа хăварса пуянлатасси, ăна çамрăк ăрăва парасси», – тет Валерий Филимонов.

«Фармация» ПУП паян 55 аптекăна /çав шутра 23 филиала/, 99 аптека пунктне, хăйĕн транспорт служби пур аптека базине /курттăм сутаканнине/ пĕрлештерет. Предприятире 800 яхăн çын тăрăшать. Компанин Чăваш Енĕн фармрынокĕнчи тўпи – 28%. «Фармация» конкуренци ўссе пынине пăхмасăр рентабельлĕхне çухатмасть, ăнăçлă ĕçлет. Вăл Чăваш Енри федераци, регион çăмăллăхĕсемпе усă курма ирĕк пур чирлисене эмел хатĕрĕсемпе тивĕçтерет. Çавăн пекех – республикăри сиплевпе профилактика учрежденийĕсене те. Предприяти фармацевтикăн ертсе пыракан организацийĕсемпе килĕшўсем ăнăçлăн тăвать, çакă унăн шанчăклăхĕпе пĕлтерĕшне кăтартать. «Фармация» ПУПра эмел препарачĕсен пахалăхне нумай шайра тĕрĕслессин тытăмне йĕркеленĕ: аптекăна çитнинчен пуçласа чирлĕ çынна сутни таранах.

Паянхи этем тавар пахалăхне те, хăйĕн ыйтăвне мĕнле татса панине те тĕплĕн тишкерет. Çакна пулах ертўçĕсем предприяти имиджĕ пирки манмаççĕ, ассортимента пуянлатсах тăраççĕ, ĕçченĕсем клиентсемпе вашават пуччăр тесе тăрăшаççĕ. Юлашки çулсенче чылай аптекăра, çав шутра районсенче вырнаçнисенче те, юсав ĕçĕсем иртернĕ. Европа стандарчĕсене тивĕçтерекен оборудованипе пуянлатнă аптекăсене çўреме чăнласах та кăмăллă.

Компани Чăваш Енри социаллă проектсене пурне те хастар хутшăнать. Унăн рейтинг кăтартăвĕсем – Раççей Федерацийĕн чи пысăк 100 аптека сечĕн йышĕнче. Шайлашуллă хаксем, çăмăллăхсен системи, паха препаратсемпе тивĕçтерни – çаксем йăлтах çынсене сывлăхне упраса хăвармашкăн пулăшассипе, пурнăç пахалăхне лайăхлатассипе, ĕмĕре вăрăмлатассипе çыхăннă. Пĕрмай малалла ăнтăлни, çĕннинчен хăраманни «Фармация» ПУПа ăнăçлă ĕçлеме тата аталанма май параççĕ.

■ **Ирина КЛЕМЕНТЬЕВА**

Апат паха-и?

Октябрь уйăхĕн 30-мĕшĕнче Шупашкарти кооперацин институтĕнче "Хальхи вăхăтра çĕршывăн апат-çимĕç хăрушсăрлăхне тивĕçтерессипе çыхăннă йывăрлăхсем тата потребительсен кооперацийĕн тĕллевĕсем" ыйтупа "çавра сĕтел" иртрĕ. Унта Раççей кооперацин университечĕн, унăн Шупашкарти, Хусанти, Саранскри, Мичуринскри институтĕсемпе филиалĕсен профессорĕсемпе преподавателĕсем, патшалăхпа муниципалитет органĕсен тата кооперацин организацийĕсен ĕçченĕсем хутшăнчĕç.

Мероприятие институтăн ăслăлăх енĕпе ĕçлекен проректорĕ Леонид Таймасов уçрĕ. "Çĕршывăн апат-çимĕç хăрушсăрлăхне туллин тивĕçтерсен кăна Раççей патшалăхĕпе обществине аталантарайăпăр. Çынсем патне продукци çитерессинче потребительсен кооперацийĕн тўпи пысăк", – терĕ вăл.

Сăмах илнисем апат-çимĕç хăрушсăрлăхĕн теорийĕн аспекчĕсене, регионсенче продукци хăрушсăрлăхне тивĕçтерес ĕçĕн паха опычĕпе пуласлăхне, потребкооперацин унти вырăнĕпе пĕлтерĕшне сўтсе яврĕç.

ЧР ял хуçалăх министрĕн çумĕ Алексей Самаркин, Чăвашпотребсоюз правленийĕн председателĕн çумĕ Андрей Данилов региона ĕçме-çимепе тивĕçтерессине тишкерчĕç. Институтăн суту-илўпе технологи факультечĕн деканĕ Галина Калинина "Апат-çимĕç хăрушсăрлăхĕн теори никĕсĕсем" ыйтупа доклад турĕ. Юридици факультечĕн деканĕ Михаил Тимофеев продукци хăрушсăрлăхĕн методологи çулйĕрне уçăмлатрĕ. Общество аталанăвĕн ĕçме-çиме технологийĕсен, экономика тата суту-илў кафедрисен заведующийĕсем Алексей Димитриев, Дмитрий Новиков тата Татьяна Григорьева, Регина Захаркина /Саранск/, Валентина Коростелевăпа Борис Габитов /Хусан/, Владимир Коротенков /Смоленск/ халăха паха продукци сутассипе çыхăннă ыйтусене тишкерчĕç.

■ **Г.ЛОХОНОВА, педагогика ăслăлăхĕсен кандидачĕ**

Ирина Егорова, Канаш районĕнчи Çеçпĕлти Çеçпĕл Мишши музейĕн заведующийĕ:

– Ентешĕмĕр патне халăх туртăнать. Çакна асăрхарăм: чăваш чĕлхипе литературине вĕрентекенсем шкул ачисене музее хатĕрлесе илсе пыраççĕ, ачасем Çеçпĕл сăввисене пĕлеççĕ. Хула ачисем те Çеçпĕл шăпипе кăсăклании савăнтарать. Çулленех пиншер çын пулса курать музейре. Çак кунсенче Патăрьел районĕнче Алманчă ялĕн ачисене йышăнтăмăр. Эпĕ музейре 2001 çултанпа ĕçлетĕп, 10 çул – заведующире.

Антонина Андреева, Çеçпĕл Мишшин тĕп хулари музейĕн заведующийĕ:

– Çеçпĕл Мишшисĕр чăваш халăхĕ те çук. Унăн кăмăл-шухăшĕ пĕтĕмпех сăввисенче. Вĕсем пире халĕ те, хамăра нихçанхинчен те ытларах пулăшмашкăн, кирлĕ.

Поэтăн 115 çулхи юбилейĕ тĕлне конкурс ирттертĕмĕр. Хальхи ыттисенчен уйрăларах тăрать. Çеçпĕле ўнер урлă кăтартса, уçса памалла пулчĕ. Экспертсем конкурса пĕтĕмлетрĕç. Мĕн калама пулать-ха? Конкурсантсем Çеçпĕле ăнланни, манманни палăрчĕ. Çĕнĕ шухăшсем калакансем те пулчĕç. Конкурса Тюмень облаçĕнчен, Тутарстанран ĕçсем килчĕç.

Çĕнтерўçĕсене музейре ноябрĕн 18-мĕшĕнче чыслатпăр.

Анисия Игнатьева, Шупашкарти 12-мĕш шкулти чăваш чĕлхипе литературине вĕрентекен:

– Вырăс шкулĕнчи ачасем те Çеçпĕл Мишшин пултарулăхĕпе паллашаççĕ. Тăхăрмĕш классем уйрăмах кăсăкланаççĕ. Вĕсем çулĕпе те аслăрах, пĕлес туртăмĕ те ытларах. Поэтăн «Чăваш ачине» сăввине пăхмасăр вĕреннисĕр пуçне ачасем Çеçпĕлĕн пурнăçĕпе, ĕçĕ-хĕлĕпе питĕ интересленеççĕ. Шкулта темиçе çул каялла ачасен аллипе çырса хатĕрленĕ альманах халĕ те упранать.

Николай КАРЛИН

Çеçпĕле асăнса

Авалхи Шупашкар çийĕн кĕçĕр
Вĕтĕ çумăр каллех пĕрĕхет,
Вĕçсĕр-хĕрсĕр кĕрхи пĕлĕт витĕр
Пĕчĕк ушкăн хуркайăк вĕçет.

Каяс çулĕ вĕсен питĕ вăрăм,
Çитес вырăн таçта аякра,
Хăвалать сивĕ çил урăм-сурăм
Кайăкхур картине кăнтăра.

Манăн халĕ хуркайăк пуласчĕ,
Çĕкленесчĕ кĕрхи тўпене,
Кайăкхур картипе çул тытасчĕ
Аякри-аякри çĕрсене.

Анчах ĕмĕтĕм темшĕн çунатсăр,
Çунатсемсĕр анам çĕр çине,
Çĕр çинчен, куççуле кăлармасăр,
Ăсатам çав тăван чунсене.

Çичĕ шыв, çичĕ шур çийĕн
вĕçĕр,
Çăлтăр тăрăх çулсем суйласа,
Çеçенхир варрине вĕçсе çитĕр
Пĕр чăваш ачине шыраса.

Вăл унта çывăрать вăранмасăр,
Чăвашсен чи телейсĕр ачи,
Çут тĕнче нушине чăтаймасăр
Çамрăклах çĕре кĕнĕ каччи.

Çаплах ăшăм вăркать –
ирĕкпех-ши
Пуçне хучĕ пăлхавçă поэт?
Тен, тискер тăшмансем
пĕтермен-ши?
Чăннине Çўлти Турă пĕлет...
Ют çĕрте çывăрать халь,
мăнтарăн,
Ют тўпе айĕнче çывăрать,
Вăранмашкăн ун ыйăхĕ тарăн,
Анчах хăй вăл пире вăратать.

Вăратать чăвашра чăн чăвашлăх,
Чĕркуççи çинчине – вăй парать,
Кĕрешме, çĕнтерме, пурăнмалăх
Хурçă шанчăк пирте çуратать.

Çеçпĕлтен пуçланса янăраççĕ,
Хусанкай та, Элкер те, Ухсай.
Çеçпĕл чĕртнĕ вутра туптанаççĕ
Сементер те, Айхи те, Туркай...

Авалхи Шупашкарăмăр çийĕн
Пĕлĕтсен пĕр хĕрри çуталать,
Каça юлнă хуркайăк картийĕ
Аякра-аякра çухалать.

Шанчăка чĕрере упрасассăн,
Хĕл иртет те килет çуркунне,
Çавăн чух çеçпĕлсем
çурăлсассăн,
Кайăксем вĕçсе килĕç килне.

Кайăксем çуркунне вĕçсе килĕç,
Чăвашсен Сарă Кун çĕршывне,
Халăха уçă сасă парнелĕç
Аслă сăвăçăн çутă пилне.

Поэт çулĕ

Çўрес тесессĕн Çеçпĕл çулĕ
тăрăх,
Вăл курнине сан хăвăн курмалла,
Çирĕм ик çул та тепĕр çичĕ уйăх
Вăл чăтнине йăлт хăвăн чăтмалла.

Çўрес тесессĕн Çеçпĕл çулĕ
тăрăх,
Мĕн пĕчĕкрен аттесĕр ўсмелле,
Шăла çыртса тўсеймесен те урăх
Тискер чире куллен
çĕнтермелле...

Чĕрў чăнах та хурçăран пулсан та
Çав чир асапĕ илĕ канăçна.
Сăвă çырса чун хавалне тупсан та
Çав чир вĕçертмĕ ĕмĕрне сана.

Çўрес тесессĕн Çеçпĕл çулĕ
тăрăх,
Вунсаккăртах çулпуçĕ пулмалла,
Течче çитсе – е сивĕ-и,
е шăрăх –
Çĕн ялавпа хăюллăн утмалла.

Ун çулĕпе утасшăнах пулсассăн,
Айăпсăрах сана кĕтет тĕрме,
Пĕртен те пĕр юратăвна
тупсассăн,
Унпа май килмĕ ĕмĕр ирттерме.

Тĕрĕслĕхе тек шанмасассăн урăх,
Шупашкартан сан пилсĕр
каймалла,
Курман, пĕлмен ют халăх çĕрĕ
тăрăх
Кĕлмĕçленсе кĕтес шырамалла.

Инçе çĕрте, пĕр тутă та
пĕр выçă,
Ялан чăваш тĕнчишĕн çунмалла,
Çын мăшкăлне тўссе тăраннă
хыççăн
Юлашки хут чĕрўн сан тапмалла.

Саманисем халь чăн та çĕнĕ,
урăх
Халь пурăнать кашни хăй пĕлнĕ
пек.
Анчах санпа мана ан хуштăр Турă
Çапла утмашкăн Çеçпĕл çулĕпе.

ТЁП РЕДАКТОР СĂМАХĔ

«Ликвидацилес!..»

Е çав сăмаха аса илсен халь те чун кисренет

Ырă влаç ырă ĕçсем тăвать. Ырă марри – ырă мар ĕçсем.

Çапла пулнă, çапла пулать те. Пурнăç!

...2004 çулхи декабрь вĕçĕнче чăваш çыравçисем, çĕнĕ 2005 çула кĕтсе илме хатĕрленекенсем, шартах сикрĕç – иккен Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн председателĕ С.Гапликов (ăçтан тупса килнĕччĕ-ха çавскере хĕвеллĕ Чăваш Ене?) асăннă уйăхăн 24-мĕш кунĕнче «О ликвидации республиканских государственных учреждений «Редакция журнала «Тăван Атăл», «Редакция журнала «Ялав» и «Редакция журнала «Капкăн» ятлă 334-мĕш номерлĕ постановление алă пусса çирĕплетнĕ.

Мĕскер, мĕскер? *«В целях повышения эффективности управления государственной собственностью Кабинет Министров Чувашской Республики поставновляет: 1. Ликвидировать... «Тăван Атăл»... «Ялав»... «Капкăн»?!*

Усал тĕлĕкре-и ку е пурнăçра-и? Кун пекки пулма пултараймасть! «Тăван Атăл», «Ялав», «Капкăн» – чăваш халăхĕн нимле укçапа та хаклама май çук пуянлăхĕ, чăваш чунне вăй-хал паракан, ăс-хакăлне хавхалантаракан чăн-чăн Кĕтрет! Мĕнле – *«ликвидаци»?!* Мĕн калаçатăр эсир?! Кун пекки пулма пултараймасть!!!

Çук çав – усал тĕлĕк те, кăнттам шӳтпе хура ултав та мар иккен ку. Ку – тĕрĕсси. Чăваш Ен правительствин йышăнăвĕ чăнах та пур, С.Гапликов господин ăна *чăнах та* хăйĕн хĕрӳ ĕçре хытса пиçĕхнĕ аллипе пусса çирĕплетнĕ...

Эп ун чухне Чăваш Республикин Профессиллĕ писательсен пĕрлĕхне ертсе пыраттăмччĕ. Каламасăрах паллă – литературăпа сатира журналĕсемсĕр чăваш литератури те, чăваш çыравçисем те çук. Паллах, чи малтан эп хамăн чи çывăх юлташăмсенчен пĕрин патне, «Ялав» журнала 30 çула яхăн ăнăçлă ертсе пынă (çав шутра асар-писер çĕнйĕркелӳ вăхăтĕнче те) Чăваш халăх поэчĕ **Юрий Сементер** патне шăнкăравлатăп: «Юрий Семенович, МĔН КУ?! МĔН пулса иртет?! Санпа та пулин канашларĕç-и хуть?!»

«Мĕн канашлани унта, – тет халран кайнă сумлă сăвăçăмăр тата «Ялав» журналăн тĕп редакторĕ, – Чĕнсе илчĕç те ыран правительствăн çакăн пек йышăнăвĕ кун çути курать терĕç».

Юрий Сементерпе калаçнă хыççăн эп пĕтĕм чăваш халăхĕ, пĕтĕм Чăваш Ен чунтан хисеплекен Илья Павлович Прокопьев патне (эпир унпа кашни кун тенĕ пекех е телефонпа, е тĕлпулса калаçаттăмăр, халĕ те час-часах сăмахлатпăр) шăнкăравлатăп. Хисеплĕрен те хисеплĕ Илья Павловичăмăр, тивĕçлĕ канăва тухсан Раççей Писателĕсен пĕрлĕхĕн членĕ (пултаруллă публицист пек) пулса тăнăскер, асăннă усал хыпара илтсен, пĕр хушă калаçайми пулчĕ. «Пулма пултараймасть! – терĕ вăл тăна кĕрсен. – Пулма пултараймасть!.. Сакăрвунă çул тухса тăнă «Ялава», халăх чунтан юратакан «Тăван Атăлпа» «Капкăна» – *ликвидацилес?!* Пулма пултараймасть! Ку вăл – пирĕн халăха, пирĕн литературăпа культурăна сăтăр туни, урăх нимĕн те мар!»

...Çапла, малтанах *кун пек пулма пултарнине* никам та ĕненмерĕ. Анчах ĕненмех тиврĕ.

Паллă ĕнтĕ (ку чăнлăха пĕтĕм тĕнче пĕлет) эпир – чăвашсем – питĕ тӳсĕмлĕ те чăтăмлă халăх. Пире тепĕр чух уççăнах кӳрентереççĕ – эпир чăтатпăр, пиртен тепĕр чух куçкĕретех кулаççĕ – эпир тӳсетпĕр. Пиртен нумайăшне пырса тивет наци характерĕн çак хăйнеевĕрлĕхĕ. Ун чухне те, çӳлерех асăннă *ликвидациле* çыхăннă лару-тăрура та, чĕнмесĕр ларма, тĕмсен хыçне пытанса юлма пулатчĕ-тĕр... Анчах та, тав Турра, çав хĕллехи кунсенче чăваш çыравçисемпе журналисчĕсем, ăсчахĕсемпе ӳнерçисем КУÇ УМĔНЧЕ ПУЛСА ИРТЕКЕН, ПĔТĔМ ХАЛĂХА ПЫРСА ТИВЕКЕН ĂССĂРЛĂХПА килĕшмерĕç, ăна тӳрре кăлармарĕç, пĕр кăмăллă пулса Чăваш Республикин ун чухнехи ертӳçи Н.В.Федоров ячĕпе уçă çыру çырчĕç (пытармастăп – çав çырăва манăн хамăн аллăмпа, хĕрӳ ĕçре пиçĕхсе хытнă-и вăл манăн, хытайман-и-ха – татса калаймастăп, çырма тиврĕ). Шăп та лăп ХĔРĔХ ÇЫН алă пусрĕ çав çыру айне (шел, çав хисеплĕрен те хисеплĕ, сумлăран та сумлă хăш-пĕр çыннăмăрсен канăççăр чĕрисем паян тапмаççĕ, анчах та вĕсен çутă сăнарĕсем, пархатарлă ĕçĕсем яланах пирĕнпе пĕрле).

Кăшт вăхăт иртсен эпир Чăваш Республикин Профессиллĕ писательсен союзĕ çав тапхăрта кăларса тăнă «Хавхалану» хаçатăн (пурччĕ ун пек хаçат!..) 4-мĕш номерне, тĕпрен илсен, çак «истори пĕлтерĕшлĕ» постановление халаллăрăмăр, унта С.Гапликов господин алă пусса çирĕплетнĕ постановление хăйне, чăваш халăхĕн сумлăран та сумлă 40 ывăлĕпе хĕрĕ Н.Федоров господин ячĕпе çырнă çырăва, Чăваш халăх поэчĕн **Георгий Ефимовăн** чунне ыраттарса çырнă **«Ялавпа» «Тăван Атăла» ĕлĕкхи пекех кăларасчĕ»** тата Чăваш Республикин культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕн (халĕ Чăваш халăх писателĕ) **Денис Гордеевăн** шухăша яракан **«Алран кайми ĕç пур çĕртех»** статйисене, ЧР Профессиллĕ писательсен пĕрлĕхĕн правленийĕн 2005 çулхи январĕн 20-мĕшĕнче пулса иртнĕларăвĕн протоколне тата çак йĕркесен авторĕн **«Хавхалансах ĕçлесчĕ те...»** умсăмахне пичетлерĕмĕр.

«Усси пулчĕ-и?» – тетĕр-и?.. Паллах ПУЛМАРĔ! (Ырă влаç ырă ĕçсем тăвать, ырă марри – ырă мар ĕçсем). Юратнă халăхăмăрăн хисеплĕ, пĕтĕм Чăваш Тĕнчи пĕлекен ывăлĕсемпе хĕрĕсем çырнă коллективлă çырăва Чăваш Ен ертӳçин канцелярине кайса парса регистрацилене те ним усси те пулмарĕ, «Хавхалану» хаçатăн ятарлă номерне кăларнин те... Илтмене печĕ ХАЛĂХ САССИНЕ Чăваш Ене вăл вăхăтра ертсе пынă тӳре-шара. Илтмене печĕ, хурав памарĕ, хăйĕн йăнăшне тӳрлетмерĕ. МĔН уншăн ХАЛĂХ? МĔН уншăн халăхăн нуши, инкекĕ? Ун чухнехи тӳрешара *хăйĕн пурнăçĕпе* пурнатчĕ, халăх – *хăй пурнăçĕпе...*

* * *

Мĕншĕн, мĕнле тĕллевпе аса илтеретĕп-ха эп сана, хисеплĕ Вулаканăм, вунă çул каярах пулса иртнине (эккей – еплерех «чаплă юбилей»!)? Мĕншĕн?.. Мĕншĕн тесен – *кун пеккине* манма юрамасть! *Кун пеккине* эпир мансан та Истори мамасть. Манмастех! **Влаçăн, влаç органĕсенче ĕçлекенсен пĕтĕм халăха, халăхăн чи пысăк мулне – литературипе тата культурипе – çыхăннă ыйтусене татса панă чухне ăссăрла та çăмăлттайла хăтланма юрамасть.**

Чăннипех те пысăк сăтăр турĕ пирĕн халăха, пирĕн литературăна ЧР Министрсен Кабинечĕ 2004 çулхи декабрĕн 24-мĕшĕнче йышăннă 334-мĕш номерлĕ постановлени (ячĕ хăй мĕне тăрать – **«О ликвидации республиканских государственных учреждений...»**) Тав Турра – хальлĕхе «Тăван Атăлпа» «Капкăн» журналсем (вĕсен редакцийĕсенче питĕ сахал çын ĕçлет, питĕ пĕчĕк шалу илет пулин те) халăхăмăр патне, сан патна, Вулаканăмăр, çитеççĕха. «Ялав» журнала вара – çухатрăмăр. Шел, питĕ шел...

ИРТНИНЕ маннисемшĕн ПУЛАСЛĂХ çук.

Çак ансат чăнлăха яланах асра тытар.

■ **Валери ТУРКАЙ**

ХАЛĂХ ИТЛЕВĔ

Çитес çул çăмăлах пулмĕ

Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ 2015 çулхи планпа пăхнă 2016 тата 2017 çулсенчи бюджета проекчĕ пирки халăх итлевне ирттерчĕ. Ку – парламентăн черетлĕ сессийĕн кун йĕркине кĕртес умĕн тунă юлашки утăм.

Унччен проекта Патшалăх Канашĕн Бюджет, финанс тата налуксем енĕпе ĕçлекен комитетра пур енлĕн тишкернĕ, эксперт канашĕн, юридици ведомствин тата прокуратура тĕрĕслевĕ витĕр тухнă. Çав кун хатĕр проектпа республика парламенчĕн тата тĕрлĕ шайри ытти депутатсене, вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен, предприятисемпе учрежденисен ертӳçисене, чĕннĕ хăнасене Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн Председателĕн заместителĕ – финанс министрĕ Светлана Енилина тĕплĕ паллаштарчĕ. Светлана Александровна сăмахне ЧР экономика аталанăвĕн, промышленноç тата суту-илӳ министрĕ Владимир Аврелькин слайдсемпех ăнлантарни тата та уçăмлатрĕ. Министрсем сăмах иличчен проект бюджечĕ мĕнле çырăнни çинчен парламентăн Бюджет комитечĕн председателĕ Анатолий Князев каласа кăтартрĕ: «Тĕнчери лару-тăру çивĕчленме тата тенкĕ хакĕ йӳнелме тытăннăран ăна йĕркелеме пĕртте çăмăл пулмарĕ, анчах эпир кашни ведомствăн, учрежденисен, министрствăсен ертӳçисен сĕнĕвĕсене, уйрăм çынсен шухăшĕ таранах шута илме тăрăшрăмăр. Тӳрех палăртса хăварам: бюджет хальхинче те социаллă пĕлтерĕшлĕ...». Çакна Чăваш Республикин Тĕрĕслевпе шутлав палатин председателĕ Татьяна Минина та, Патшалăх Канашĕн Эксперт канашĕн председателĕ Владимир Шуверов та çирĕплетрĕç.

Чăнлăха пытараймăн: çитес çул патшалăхшăн та, республикăшăн та çăмăл пулмĕ. Чăваш Ене федераци бюджетĕнчен тавăрса памалла мар траншсем килесси иккĕленӳллĕ. Инфляци ӳсĕмĕ мĕнле пулассине те никам та çирĕплетсе калаймĕ. Хăш-пĕр эксперт шухăшĕпе вăл 12% çитмелле. Унăн тӳнтер енĕ экономикăна питĕ ăпăк витĕм кӳрĕ. ЧР экономика аталанăвĕн министрĕ Владимир Аврелькин ахальтен мар ытларах хамăр вăй-хала, производство хăватне шанса ĕçлеме, налук пухассин калăпăшне ӳстерме, тĕрлĕ проектпа программăна ĕçлеттерме сĕнчĕ. Уйрăмах ку çар саккасĕсене пурнăçлассипе çыхăннă производствăна пырса тивет. Чапаев ячĕллĕ, «Элара» тата Çĕмĕрлери ятарлă автомобильсен фургонĕн завочĕсен тата ытти предприятин пахалăхлă продукцине ăна потребительсем патне вăхăтра çитермелле. Çил вăйĕпе ĕçлекен электродвигательсен производствине хута ямалли çинче те чарăнса тăчĕ министр. Апла тăк çăмăл мар тапхăрта та республика социаллă пурнăçпа экономика аталанăвĕнчи йывăрлăхĕн шурлăхне путмĕ. Мĕншĕн тесен тĕнчери тата çĕршыври экономикăри халĕ тухса тăнă лару-тăрăва шута илсе республикăн виçĕ çуллăх бюджетне икĕ вариантпа – лайăхланассине тата кăткăсланассине тĕпе хурса – хатĕрленĕ.

2015 çулхи бюджет калăпăшĕ кăçалхинчен кăшт пĕчĕкрех пулĕ. Тупăш пайĕн калăпăшĕ 33,4 млрд тенкĕпе /кăçалхи шайăн 91,2%/ танлашмалла. Тепĕр икĕ çулĕнче /2016 тата 2017/ çак кăтарту 3 тата 4 млрд ытла тенкĕ таран ӳсмелле. Çитес çулхи бюджет тăкакĕсем те пĕчĕкех мар. Малтанлăха палăртнă тăрăх бюджет дефицичĕ 3,4 млрд тенкĕпе е республикăн хăйĕн тупăшĕн 14,9% танлашмалла. «Программăллă тăкаксен калăпăшăн 98,8% чухлĕ пулмалла.

Бюджет çапах та хăйĕн социаллă пĕлтерĕшне çухатмасть. Çитес çул вĕрентӳ тытăмне 11,1 млрд тенкĕ хывĕç, сывлăх сыхлавне аталантарма 6,8 млрд тенкĕпе усă курĕç, социаллă политика валли 7,5 млрд тенкĕ куçарĕç. Ытти отраслье сферăсене те витĕмлĕ пулăшусăр хăвармĕç. Чăваш Республики халĕччен патшалăх парăмĕпе вăхăтра татăлса пынă. Малашнехи тапхăрта вăл кăштах ӳсĕ – 2015 çулхи регион пĕтĕмĕшле продукчĕн 5,5% калăпăшĕнчен 2017 çул вĕçленнĕ тĕле 5,9% çитĕ.

Кашни çын, паллах, ырриннех ыррине кĕтет. Унăн тулăх, тăнăç обществăра пурăнас, ачи-пăчине ӳстерес, пурнăç çулĕ çине кăларас килет. Çапах та пурнăç – пурнăçах, унăн хăйĕн кукрашки нумай. Чылай чухне хăйĕн йывăр лару-тăрăвĕ витĕр кăларса пирĕн тӳсĕмлĕхе, вăй-хăвата, пĕтĕçӳлĕхе тĕрĕслет. Халăх итлевĕнче бюджета хак паракансем çакна ăнланса калаçрĕç. Ырă сĕнӳ-канаш сахал мар пулчĕ: чăваш ялĕнче ĕç вырăнĕ ытларах уçас тĕллевпе хăмла плантацийĕсене тепĕр хут чĕртесси /ахальтен мар ăна «симĕс ылтăн» теççĕ-çке/, выльăх-чĕрлĕх производствине çӳллĕ шая çĕклесси, муниципалитетсен пурлăхĕпе туллин усă курасси, юхăнса выртакан çĕрсене пусă çаврăнăшне кĕртесси тата ытти çинчен тĕплĕ те уçă калаçу пычĕ. Халăх итлевне ертсе пынă Анатолий Князев депутат вĕсене кашнине шута илсе тĕплĕ тишкерме, тĕшши пуррисемпе малашнехи ĕç-хĕлре усă курма шантарчĕ, вĕсене Патшалăх Канашĕн черетлĕ сессийĕччен Бюджет комитечĕн анлă ларăвĕнче сӳтсе явĕç, тӳрлетӳ таблицисем хатĕрлĕç.

■ **Юрий СТЕПАНОВ**

Аваллăх управçинче – чăваш эрешĕсем

Авалтан чăваш халăхĕ пултаруллă та ăста тĕрĕçĕсемпе палăрнă. Вĕсем тĕрĕ искусствине упраса хăварма тата чĕртсе тăратма пултарнă.

Халăх йăли-йĕркине, культурине аталантарас тĕллевпе Етĕрнери ӳнерпе тавра пĕлӳ музейĕнче «Хальхи çи-пуç çинче чĕрĕлнĕ чăваш эрешĕсем» курав уçăлнă.

Выставкăна тăратнă ĕçсен авторĕ – Пушкăрт ялĕнчи алă ăсти Ольга Шмелева. Ольга Петровна тĕрлеме питĕ ăста, темĕнле тĕрĕ те пĕлет. Вăл концерт тумĕсене те, килти çи-пуçа та, ялти пултарулăх ушкăнне çӳрекенсен кĕписене те тĕрлесе капăрлатать. Унăн ĕçĕсенче пĕрешкел тĕрĕ пĕрре те тĕл пулмасть. Кашнинчех çĕннине тупма тăрăшать пултаруллă хĕрарăм. Çапла вара авалхи чăваш искусстви паянхи тум çинче те вырăн тупать. Ольга Шмелева пултарулăхĕн вăрттăнлăхĕсене ялти çамрăксене те уçса парать.

Р.ИВАНОВА.

ГАРАНТ. Только проверенная информация!

ООО «Гарант-Чебоксары»
Тел.: (8352) 43-95-25
www.garant121.ru

УВЕРЕННОСТЬ В КАЖДОМ РЕШЕНИИ.
ГАРАНТ
ИНФОРМАЦИОННО-ПРАВОВОЕ ОБЕСПЕЧЕНИЕ

© ООО «НПП «ГАРАНТ-СЕРВИС-УНИВЕРСИТЕТ», 2014. Система ГАРАНТ выпускается с 1990 года.
Компания «Гарант» и ее партнеры являются участниками Российской ассоциации правовой информации ГАРАНТ.

РЕКЛАМА

Постановление Кабинета Министров Чувашской Республики

24.12.2004 г. № 334 г.Чебоксары

О ликвидации республиканских государственных учреждений «Редакция журнала «Тăван Атăл», «Редакция журнала «Ялав» и «Редакция журнала «Капкăн».

В целях повышения эффективности управления государственной собственностью Кабинет Министров Чувашской Республики постановляет:

1. Ликвидировать республиканское государственное учреждение «Редакция журнала «Тăван Атăл», республиканское государственное учреждение «Редакция журнала «Ялав» и республиканское государственное учреждение «Редакция журнала «Капкăн».

2. Министерству культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики совместно с Министерством имущественных и земельных отношений Чувашской Республики в установленном порядке осуществить необходимые организационно-правовые действия, связанные с ликвидацией указанных учреждений, в том числе предоставление о гарантий и компенсаций в соответствии с трудовым законодательством Российской Федерации.

3. После завершения ликвидации республиканского государственного учреждения «Редакция журнала «Тăван Атăл», республиканского государственного учреждения «Редакция журнала «Ялав» и республиканского государственного учреждения «Редакция журнала «Капкăн», Министерству культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики выйти с предложением в Кабинет Министров Чувашской Республики об исключении республиканского государственного учреждения «Редакция журнала «Тăван Атăл», республиканского государственного учреждения «Редакция журнала «Ялав» и республиканского государственного учреждения «Редакция журнала «Капкăн» из перечня организаций, находящихся в ведении Министерства культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики, утвержденного постановлением Кабинета Министров Чувашской Республики от 15 мая 2004 г. №118 «Вопросы Министерства культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики» /с изменениями, внесенными постановлением Кабинета Министров Чувашской Республики от 15 октября 2004 г. №249/.

4. Контроль за выполнением настоящего постановления возложить на Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики.

Председатель Кабинета Министров Чувашской Республики С.ГАПЛИКОВ.

Чăваш Республикин Президентне Н.В.ФЕДОРОВА

Хисеплĕ Николай Васильевич!

Иртнĕ çулхи декабрĕн 24-мĕшĕнче Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕ «О ликвидации республиканских государственных учреждений «Редакция журнала «Тăван Атăл», «Редакция журнала «Ялав» и «Редакция журнала «Капкăн» ятлă йышăну тунă. Пирĕншĕн ку йышăну пачах та савăнтарман, хавхалантарман документ пулса тăчĕ.

Эсир, Николай Васильевич, юлашки çулсенче чăваш литературипе культурине, чăваш халăхĕн сумне-хисепне аталантарас-çĕклес тĕлĕшпе питĕ нумай ырă та пархатарлă ĕç турăр. Сире пула пире, чăвашсене, тĕнчери халăхсем ытларах пĕлме, ытларах хисеплеме пуçларĕç. Эсир 2003 çулхи декабрĕн 11-мĕшĕнче чăваш çыравçисен пĕрлĕхĕн юбилейĕнче каланă тарăн шухăшлă сăмах паянхи кун та чăваш писателĕсене çĕнĕлле ĕçлеме, тăван халăхшăн ытларах тăрăшма хавхалантарать.

Çӳлерех асăннă йышăнăва мĕне пула тата мĕн тĕллевпе тунине эпир, паллах, тĕпĕйĕрĕпе пĕлеместпĕр. Çапла, «Ялавпа» «Тăван Атăл» журналсен пахалăхĕ пирки, вĕсем паянхи вулакана тивĕçтернипе тивĕçтерменни çинчен çивĕч калаçу хускатма тахçанах вăхăт çитнĕччĕ. Кун пек калаçăва хускатма чăваш çыравçисем хатĕрччĕ. Анчах та асăннă журналсене ликвидацилекен йышăнăва ырлама, унпа килĕшме эпир ниепле те пултараймастпăр. Пирĕн, икĕ миллионлă чăваш халăхĕн, капла та литература журналĕсем иккĕ çеç. Ку – пĕрремĕшĕ.

Иккĕмĕшĕ. Пире, пĕтĕм чăваш нацине тӳрремĕнех пырса тивекен çӳлерех асăннă документа халăхпа тĕплĕн тата уçăмлăн сӳтсе явмасăр йышăнни тивĕçтермест.

Виççĕмĕшĕ. «Ялавпа» «Тăван Атăл» журналсене «Хресчен сасси» хаçатăн «çуначĕ» айĕнче кăларса тăма палăртни те, пирĕн шутпа, тĕрĕс мар утăм. Мĕншĕн тесессĕн «Хресчен сасси» – çамрăк хаçат. Вăл 1991 çултанпа кăна пичетленет. Урăхла каласан, ку хаçата сумлă, пысăк та ырă традициллĕ кăларăм теме иртерех-ха.

Тăваттăмĕшĕ. Çапла, эпир ăнланатпăр, перекетлĕ пулмалла, перекетлĕ пурăнмалла. Çапах та сăмах наци литератури, наци мăнаçлăхĕ пирки пынă чухне, пирĕн шутпа, перекетлĕх чи пысăк пахалăх мар. Эпир, чăвашсем, хамăрăн пуласлăхăмăр пирки хамăр тăрăшмасан, ку ĕçе пирĕншĕн никам та тăвас çук. Ку шухăша, хисеплĕ Николай Васильевич, Эсир пире асилтерсех тăратăр.

Çӳлерех каланине тĕпе хурса тата Эсир пире, çĕнĕ ĕмĕрĕн çĕнĕ чăвашĕсене, «хастарлă, хыт утăмлă» пулма вĕрентнине асра тытса, эпир, хаклă Николай Васильевич, Сиртен Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕ 2004 çулхи декабрĕн 24-мĕшĕнче тунă «О ликвидации республиканских государственных учреждений «Редакция журнала «Тăван Атăл», «Редакция журнала «Ялав», «Редакция журнала «Капкăн» ятлă йышăнăва пăрахăçлама, çак журналсене малашне йĕркеллĕ те вăхăтра, пысăк пахалăхпа пичетлесе тăма май туса пама ыйтатпăр. Çавăн пекех эпир Чăваш Республикин культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕсен министрĕн заместителĕ Т.Л.Евдокимована, çӳлерех асăннă документ кун çути курнăшăн тӳрремĕнех явапăскере, хамăр шанманнине пĕлтеретпĕр.

1.02.2005 ç.

Сире шанса та хисеплесе:

Г.А.Ефимов, чăваш халăх поэчĕ.

Д.В.Гордеев, ЧР культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ.

Ю.Г.Айдаш, ЧР патшалăх тата Çеçпĕл Мишши премийĕсен лауреачĕ.

В.А.Эльби, ЧР культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ.

В.П.Иванов, истори наукисен кандидачĕ.

Г.А.Дегтярев, филологи наукисен кандидачĕ.

П.В.Афанасьев, чăваш халăх поэчĕ, ЧР патшалăх тата Çеçпĕл Мишши премийĕсен лауреачĕ.

В.П.Эктель, ЧР культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ.

С.В.Асамат, ЧР искусствăсен тава тивĕçлĕ деятелĕ.

П.А.Крысин, ЧР культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ.

А.П.Казанов, РФ тата ЧР культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ.

Г.Г.Кабаков, прозаик, отставкăри юстици подполковникĕ.

П.А.Ялгир, ЧР культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ.

В.П.Петров, РФ тата ЧР культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ.

Н.К.Кушманов, ЧР культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ.

Н.Н.Максимов, ЧР культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ.

А.И.Мефодьев, ЧР культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ, филологи наукисен кандидачĕ.

И.П.Прокопьев, прозаик-публицист, экономика наукисен кандидачĕ.

Г.В.Краснов, чăваш халăх писателĕ, Çеçпĕл Мишши премийĕн лауреачĕ, филологи наукисен кандидачĕ.

Е.Я.Ухсай, Я.Г.Ухсай хĕрĕ, «Ялав» журнал авторĕ.

Р.В.Сарби, ЧР культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ, Çеçпĕл Мишши тата Фазыл ячĕллĕ премисен лауреачĕ.

Ю.А.Силэм, ЧР культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ.

Г.Г.Чаржов, поэт, куçаруçă.

В.П.Станьял, филологи наукисен кандидачĕ.

А.Е.Юман, РФ культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ.

Н.Г.Григорьев, РФ тата ЧР тава тивĕçлĕ врачĕ, ЧР патшалăх премийĕн лауреачĕ, медицина наукисен докторĕ, публицист.

Г.А.Уткин, писатель-публицист.

З.А.Нестерова, прозаик.

Р.С.Ярандайкин, писатель, юридици наукисен докторĕ.

Е.И.Степанова, ЧР культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ.

Л.А.Маяксем, прозаик, публицист.

В.Г.Кервен, ЧР культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ.

Н.А.Исмуков, ЧР патшалăх премийĕн лауреачĕ, философи наукисен докторĕ, профессор.

Г.И.Федоров, писатель, литературовед, филологи наукисен докторĕ, профессор.

В.И.Сергеев, филологи наукисен докторĕ, профессор, критик.

Е.П.Чекушкина /Нарпи/, филологи наукисен кандидачĕ, прозаик.

А.С.Абрамов, фотожурналист.

Ю.П.Смирнов, истори наукисен докторĕ, профессор.

Е.Е.Яшкина, художник-иллюстратор.

В.В.Туркай, чăваш халăх поэчĕ.

Форум малашлăха палăртĕ

Пĕтĕм Раççейри Халăх фронтĕн иккĕмĕш форумĕ кăçалхи ноябрĕн 17-18-мĕшĕсенче Мускавра иртет. Общество активисчĕсен конференцийĕнче 2014 çула пĕтĕмлетĕç, çĕршывăн социаллă пурнăçĕпе экономика аталанăвĕн çĕнĕ çул-йĕрне палăртĕç.

Форум ĕçне Халăх фронтĕн Чăваш Енри регион уйрăмĕ те хутшăнать. Делегаци йышĕнче – регион уйрăмĕн çум председателĕ **Николай Казаков,** регионти ĕçтăвкомăн ертӳçи **Николай Косыев,** Раççей Президенчĕн Владимир Путинăн шаннă çыннисем – **Геннадий Матвеев, Валерий Туркай** тата **Валентина Теллина.** Вĕсем В.Путин Президентăн май уйăхĕнчи указĕсене тата унăн хушăвĕсене регион уйрăмĕ мĕнле пурнăçланипе паллаштарĕç.

– Пирĕн делегаци форума пушă алăпа каймасть. Пĕтĕм Раççейри тĕлпулу умĕн эпир пысăк чылай ĕç турăмăр, – пĕлтернĕ РФ Халăх фронтĕн регион уйрăмĕн çумпредседателĕ Николай Казаков. – Конференци Раççей пурнăçĕнче пĕлтерĕшлĕ пулăмпа палăрса юлĕ, çĕршыв аталанăвне витĕмлĕ тӳпе хывĕ.

Ю.ПЕТРОВ.

Тĕнче ăмăртăвĕнчен икĕ «ылтăнпа»

Венгрири Будапешт хулинче панкратион енĕпе тĕнче ăмăртăвĕ иртнĕ. Çамрăк спортсменсен пысăк турнирне планетăри чи вăйлă вуншар хĕрпе каччă хутшăннă.

Сумлă турнирта Чăваш Ен чысне Ксения Лачкова хӳтĕленĕ. 58 килограмлă виçере кĕрешсе вăл икĕ ылтăн медаль çĕнсе илме пултарнă. Унăн тренерĕ Александр Шмелев пĕлтернĕ тăрăх – хĕр «семи-контакт» тата «фулл-контакт» дисциплинăсенче пуринчен маттуртарах пулнă, кашни тупăшура çĕнтерсе нумай очко пухнă. Пирĕн пултаруллă ентешĕн кунашкал награда пĕрре çеç мар. Кăçал вăл çĕршыв тата Европа чемпионачĕсенче пĕрремĕш вырăнсене йышăнса чи пултаруллă спортсменсен йышне кĕнĕ.

А.МИХАЙЛОВ.

Библи вакланă сăмахсене йышăнмасть, е «Сăх сăх» тени мĕн вăл

Ева ЛИСИНА,
Чăваш Республикин культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ

Библи куçарасси – питĕ кăткăс та калама çук явапла ĕç. Пире çак ĕçе мĕнле тумаллине вĕрентнĕ чухне асăрхаттарсах тăратчĕç: «Пĕр сăмахне те кăларса пăрахма юрамасть, пĕр сăмах та хушма юрамасть, çав вăхăтрах кĕскен калама, кĕскерех сăмахсене суйласа илме тăрăшăр». Халĕ, хаçат-журналта «Тунти кунхи тĕл пулу», е «Сарă тутлă хĕр ача» евĕрлĕ çырнине ««Тунтикунхи тĕлпулу», «Сартутлă хĕрача» теес вырăнне, 2 сăмаха 4 сăмахпа каланине» курсассăн яланах хам ăшăмра: «Турăçăм, тавах Сана, пире арпашăнса кайма памарăн», – тесе Турра тав тăватăп. Эпĕ нихăçан та çыру сĕтелĕ хушшине сăхсăхмасăр «халĕ çак сăмаха та уйрăммăн, «сăх сăхмасăр» тесе çырма сĕнеççĕ; тавах – аслă ăсчахăмăр Н.И.Ашмарин та, пысăк чĕлхеçĕсем В.Г.Егоров та, М.И.Скворцов та çак сăмаха пайламан» темесĕр ларман, яланах: «Турăçăм, ман ĕçĕме пилле», «Турăçăм, манăн сылтăм аллăма йăнăш çырасран тытса чар», – теттĕм. Унччен пĕрле çырнă чылай сăмаха хальхи орфографи «Чăваш чĕлхин орфографи словарĕ. Шупашкар, Чăваш кĕнеке издательстви, 2002» уйрăммăн çырма хушать, пĕртен-пĕр Кĕнеке – Библи çеç – йышăнмарĕ çакна. Мĕншĕн? Мĕншĕн тесессĕн ахаль те ăнланма йывăр, ахаль те питĕ вăрăм пуплевсене «предложенисене» «Тăват çĕр пин те улт çĕр вун иккĕ» евĕрлĕ «çĕнĕлĕхсем» ««Тăватçĕр пин те ултçĕр вуникĕ» теес вырăнне, 5 сăмаха 8 сăмахпа каланине» кĕртсе ярсассăн Библири хăш-пĕр кĕнекесене «сăмахран, *Йыша шутлани* кĕнекери 1, 2, 3, 4, 26 сыпăксене» вуласа тухма та май пулмастчĕ, çав вакланă сăмахсем мĕне пĕлтернине пĕлес тесен пĕртен-пĕр мел çеç – хутпа кăранташ тытса вĕсене цифрăпа çырса шутламалли çеç – юлатчĕ. Чăнах, çав сăмахсене уйрăм çырнă тапхăр пулнă, чĕлхемĕр туптанса литература чĕлхи пулса пынăçемĕн çав сăмахсем пĕрпĕтĕмĕхлĕ пулнине кура, вĕсене пĕрле çырма пуçланă. Чăваш чĕлхин орфографи словарĕ 17-мĕш параграфра çапла ăнлантарать: «Чăваш орфографийĕн сăмăллатнă правилисем тăрăх, сăмах майлашăвĕн пайĕсене пĕр-пĕринчен уйрăм çырасси тĕп туртăм пулса тăрать». Чăнах та çаплаши? «Сăмăллатнă» тени вырăнне «йывăрлатнă» темелле мар-и? Халь вара каялла, унченхи тапхăр патне таврăнмалла-и? Пĕтĕмлĕх вакланурен пахарах. Уйрăм çырма сĕнекенсем хăйсем те ытлашши тунине ăнкарса илнĕ пулас. Тен, çавăнпах, кăткăс лару-тăруран хăтăлас тесех, 17-мĕш параграфах хăш-пĕр сăмаха апла та, капла та çырма юрать тесе кăтартнă. Ку ĕнтĕ «аптăранă кăвакал каялла чăмнă» тениех пулать. Кĕрсе пăхха Пичет çуртне: пĕр редакцире «çăл куç» тесе çыраççĕ, юнашарах вырнаçнă редакци «çăлкуçа» суйласа илнĕ. Шкул ачисен мĕнле çырмалла – пĕр класĕ ун пек, тепĕр класĕ кун пек-и?

Библире питĕ тăтăш тĕл пулакан хăш-пĕр сăмаха танлаштарса пăхса тухар-ха.

Çĕршыв «çĕр-шыв». Икĕ сăмахран йĕркеленнĕ. Анчах *çĕр-шыв* тесессĕн пĕтĕмлĕхлĕ, анлă ăнлав вакланать. Çĕршыв вăл çĕрпе шывран çеç тăмасть, унта халăх та, халăх историйĕпе культури те кĕрет.

Эта страна бедная, там нет ни земли, ни воды, – çакна мĕнле куçармалла? Ку *çĕр-шыв* чухăн, унта çĕрĕ те, шывĕ те çук? Уçăмлă пултăр тесен ирĕксĕрех «*çĕршыв*» теме тивет.

*

Ис 66-8 пĕр кун хушшинчех *çĕршыв «çĕр-шыв»* йĕркеленет-и?

Иер 9-12 *çĕршыв «çĕр-шыв»* мĕншĕн пĕтнине...

Иона 4-2 çапла пуласса хам çуралнă *çĕршывăмра «çĕрĕм-шывăмра»* чухнех каламанччĕ-и эпĕ?

Тух 10-14 Египет *çĕршывне «çĕрне-шывне»* хĕрлĕ шăрчăк тапăннă

Зах 2-6 çурçĕрти *çĕршывран «çĕртен-шывран»* тарса килĕр

Çакăн пек тĕслĕхсем Кĕнеке туллиех! **Çĕршыва «çĕршыв» тесен çеç текст тирпейлĕ те тĕрĕс ăнлавлă пулса пырать.**

Çулпуç «çул пуçĕ», çарпуç «çар пуçĕ»

Çак икĕ сăмаха пĕрле çырни кăткăс пуплевсене куçарнă чухне чăн-чăн пулăшу пулчĕ.

Тӳре 11-6 пирĕн *çулпуç «çул пуçĕ»* пул

I Пат 13-14 Çӳлхуçа ăна Хăй халăхĕн *çулпуçĕ «çул пуçĕ»* пулма хушĕ

I Пат 25-30 сана Израиль *çулпуçне «çул пуçне»* лартсассăн...

Пс 47-15 Вăл ĕмĕрлĕхех пирĕн *çулпуç «çул пуçĕ»* пулĕ

Ис 22-3 санăн *çулпуçусем «çул пуçĕсем»* пурте пĕрле тарнă

4 Пат 9-5 акă *çарпуçсем «çар пуçĕсем»* пухăнса ларнă

I Çул 27-5 *Çарпуçсен «çар пуçĕсен»* пуçлăхĕ шутланнă

Йыш 31-14 вăрçăран таврăннă *çарпуçсене «çар пуçĕсене»* çилленнĕ...

Сăмах май каласан, хисеплĕ чĕлхеçĕсем-ăсчахсем В.Г.Егоров та, М.И.Скворцов та хăйсен словарĕсенче çак икĕ сăмаха пайламасăр, тĕрĕс-тĕкел хăварнă.

Пушхир «пушă хир», çеçенхир «çеçен хир»

Çапла калама пулать: тырра пуçтарса кĕчĕç, хир пушанса юлчĕ, куç умĕнче халĕ – пушă хир.

«Пустыня» сăмаха В.Г.Егоров çапла ăнлантарса парать: пушхир, пурăнма юрăхсăр, шывсăр, ӳсентăрансăр хир. Чăнах çапла, Иудея пушхирне эпĕ хам курнă: куç виçейми хăйăр сарăлса выртать, пĕр курăк пĕрчи те çук, пĕр сасă та илтĕнмест, хĕвел çунтарать. Çакăн пек пушхир тăрăх утнă Израиль халăхĕ. Ăна «пушă хир» тени пушхирĕн сăнарне вăйсăрлатать çеç. Танлаштарар-ха.

Аст 1-19 аслă та хăрушă *пушхир «пушă хир»* тăрăх... килтĕмĕр...

Иов 6-18 *пушхире «пушă хире»* çитеççĕ те çухалаççĕ

Аст 8-2 Сана йăвашлантарас тесе... хăвăн Турру сана хĕрĕх çул хушши *пушхир «пушă хир»* тăрăх ертсе çӳрерĕ

Ис 43-19 Эпĕ *çеçенхирте «çеçен хирте»* çул хывăп, *пушхирте «пушă хирте» юханшыв «юхан шыв»* уçăп

«7 сăмах вырăнне предложенире 10 сăмах пулса тăчĕ-çке – çак «çĕнĕлĕх» текста ăнланма, тикĕс вулама чăрмантарать!»

Ис 7-38 Вăл *пушхирте «пушă хирте»*... Ангелпа калаçнă

Тух 14-3... аташса кайрĕç, вĕсене *пушхир «пушă хир»* хупса хучĕ

Пс 106-35 Вăл *юханшывсем «юхан шывсем»* вырăнне – *пушхир «пушă хир», çăлкуçсем «çăл куçĕсем»* вырăнне типĕ çĕр тăвать «каллех ытлашши 3 сăмах хушăнчĕ».

Юланут «юлан ут», юланутçă «юлан утçă»

Библире вăрçă-харçă, çапăçу çинчен çырни нумай тĕл пулать. Юланут, юланутçăсем – çар вăйĕ. Хальхи орфографи правилипе «аллă юланут» вырăнне «алă юлан ут» çырмалла. Тĕлĕнтерет-и? Тĕлĕнтерет. Тĕлĕнмелли малалла та пулать-ха.

2 Çул 12-3 Пин те *ик çĕр* çар урапипе, утмăл пин *юлан утпа* тапăннă.

4 Пат 18-23 çавăн чухлĕ *юлан утçă* тупма пултаратăн-и?

Зах 10-5 ут утланнă *юлан утçисене* намăса хăварĕç.

Иов 39-18 *юлан ута* нимĕн мар кая хăварать.

Иер 51-21 утне те, *юлан утçине* те çапса ӳкерĕп

Ос 1-7 вĕсене ухăсăр-мĕнсĕр... утсемпе юлан утсемсĕр çăлса хăварăп. **Çак сăмахсене пĕрле çырсассăн текст тӳрех çăмăллăн вуланать-çке!**

Пĕртăван «пĕр тăван»

Моисейпе Аарон – *пĕртăвансем* «пĕр ашшĕ-амăшĕнчен çуралнă çынсем». *Пĕр тăван* камне ирĕксĕрех вырăсла ăнлантарма тивет – один родственник, один из родственников.

Калăпăр: ав унăн *пĕртăванĕ* килет – вон идет его родной брат. Ав унăн *пĕр тăванĕ* килет – вон идет один его родственник. Кам мĕнле тăван тивнине Библире питĕ тĕплĕн палăртнă. Çакна пăтраштарма юрамасть.

Çулсеренхи пĕрремĕш кĕнекере 26-мĕш сыпăкра тăтăшах тĕл пулакан *«пĕр тăван»* сăмаха пайласа çырсассăн «один родственник» ««пĕр хурăнташ» пулса тухать».

Пулт 42-13 эпир *вуникĕн пĕртăванччĕ* «çĕнĕ правило тăрăх: эпир *вун иккĕн пĕр тăванччĕ*».

Тĕнпе çыхăннă сăмахсем тĕлĕшпе тимлĕрех пулмаллаччĕ. Халăх «сăх сăх», «пуç çап», «кĕл«ĕ» ту» темест, çак вакланă сăмахсене пĕрле калать. Кĕлĕ кĕнекинче те «вĕсене вара Архиерей пиллĕхĕпе çеç кăлараççĕ» çапла çирĕпленсе юлнă. Орфографи словарĕнче кăтартнă «кĕл«ĕ» ту» сăмахăн пĕлтерĕшĕ «молиться» мар, урăхларах:

В церкви идет служба – чиркӳре кĕлĕ пырать, кĕлĕ тăваççĕ.

В церкви совершают молитву – чиркӳре кĕлĕ тăваççĕ.

«Молиться», «молюсь» тенĕ чухне халăх «кĕлту», «кĕлтăватăп» тет.

Библи хăш чухне хăех «редакцилет», мĕнле çырмаллине хăех татса парать, анчах нихăçан та сăмаха вакламасть, пачах урăхла – пĕрлештерет.

Танлаштарса пăхар-ха, Библишĕн хăш сăмахĕ юрăхлăрах:

Дан 9-3... хуйхă тумтирĕ тăхăнса, хама кĕлпе сапса *кĕлтурăм – «кĕл турăм»*. Çĕнĕ правило тăрăх «кĕл турăм» тесе çырнă пулсан, темле те ăнланмалла пулса тухатчĕ.

2 Пат 7-27... хăйĕн чĕрине Сана *кĕлтума «кĕл тума»* çакă кĕлĕпе *кĕлтума «кĕл тума»* хатĕрлесе çитерчĕ.

Мф 5-44 хăвăра кӳрентерекенсемшĕн ... *кĕлтăвăр «кĕл тăвăр»*

Пулт 24-48 чĕркуçленсе лартăм та Çӳлхуçана *пуççапрăм «пуç çапрăм»*

Лк 5-12 Ун умне ӳксе *пуççапнă «пуç çапнă»*

Вутпуççи «вут пуççи», хулпуççи «хул пуççи»

Вутпуççи тесен е йăсăрланса, кăмрăкланса выртакан пуленкке, е ниепле те çунса пĕтеймен пирки сӳнтерсе кăларса пăрахнă çунăк пуленкке аса килет. *Вут пуççи* тесен «ку мĕн-ши, вутсыппин «ку сăмаха та «вут сыппи» тесе çырмалламĕн» пайĕ-ши тесе шухăшлатăп.

Вутпуççи **Библире тата питĕ сăнарлă ярапла, ăна вăйсăрлатма юрамасть.**

Ис 7-4 çак йăсăрланакан икĕ *вутпуççирен «вут пуççирен»*... санăн чĕрӳ ан шиклентĕр

Пс 101-4 шăммăм-шаккăм *вутпуççи «вут пуççи»* пек тăрса юлчĕ.

Зах 3-2 вут-çулăмран туртса кăларнă *вутпуççи «вут пуççи»* мар-и вăл?

«Хулпуççи» те – пĕр пĕтĕмĕшлĕ сăмах. Ăна Н.И.Ашмарин та, В.Г.Егоров та, М.И.Скворцов та вакламасть, Библи те ваклама пултараймасть.

Пулт 9-23... хăйсен *хулпуççийĕ «хул пуççийĕ»* çине хурса...

Пулт 49-15 хулпуççине *«хул пуççине»* çĕклем йăтма пĕшкĕртрĕ

Иов 31-36 çав хута эпĕ *хулпуççи «хул пуççи»* çине хурса çӳрĕттĕм

«Чĕр куççи», «чĕр çи» сăмахсене курсассăн аптăрасах каятăн... Юрать-ха чыслă чĕлхеçĕсем Н.И.Ашмарин, В.Г.Егоров, М.И.Скворцов çак вак сăмахсем вырăнне «чĕркуççи», «чĕрçи» теççĕ. **Библи те çавна çеç йышăнма пултарать.**

Пс 108-24 типĕ тытнипе *чĕркуççийĕм «чĕр куççийĕм»* чĕтĕрет

Ис 35-3 чĕтрекен *чĕркуççисене «чĕр куççисене»* хытарăр

Иез 7-17 *чĕркуççисем «чĕр куççисем»* шыв пек чĕтренĕç

Çăлкуç «çăл куç»

Ку сăмах Библире питĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ. Çĕнĕ правило унăн пĕтĕмлĕхне, хăватне вакланă пулĕччĕ, эпир çавăнпа йышăнман та ăна.

Пс 35-10 Санра – чĕрĕлĕх *çăлкуçĕ «çăл куçĕ»*

Пс 73-15 Эсĕ чулран *çăлкуç «çăл куç»* çапса кăларнă

Ытар 5-18 санăн *çăлкуçу «çăл куçу»* пиллĕхлĕ пултăр

Ытар 10-11 тӳрĕ çыннăн чĕлхи-çăварĕ – пурăнăç *çăлкуçĕ «çăл куçĕ»*

Иер 9-1 куçăм куççуль *çăлкуçĕ «çăл куçĕ»* пулсанччĕ

Ис 32-2 пушхирти «пушă хирти» *çăлкуçĕ «çăл куçĕ»* пек

Тух 15-27 унта *вуникĕ «вун икĕ» çăлкуç «çăл куçĕ»* пулнă

Асăрханмасассăн илемлĕ сăнарсем те çухалаççĕ. *Шурăмпуç* мĕнле тыткăнлать чун-чĕрене! Библие çак сăмаха çĕнĕ правило çĕннĕ пек *«шурăм пуç»* тесе кĕртнĕ пулсассăн темĕнле черченлĕх çухалатчĕ.

Пулт 19-15 *Шурăмпуç «шурăм пуç»* çуталса килсессĕн...

Пулт 32-26 яр Мана, *шурăмпуç «шурăм пуç»* килет

Юрă 6-10 *шурăмпуç «шурăм пуç»* ялтравĕ евĕрскер

Çутçанталăк «çут çанталăк»

Малтанхи сăмахĕ «тахçанах пĕтĕмлĕх пулса çитнĕскер, – каçарăр, вырăслах калама тивет, – «природа», «тĕнче» пĕлтерĕшлĕскер» Библи куçарнă чухне вырăнлăрах, мĕншĕн тесен иккĕмĕш сăмахĕ «погода» еннелле сулăнтарать.

I Кор 11-14 ... сире çутçанталăк хăех пĕлтерсе тăмасть-и?

Библи – хăй те пĕтĕмлĕх кĕнеке – пĕтĕмлĕх сăмахсене сыхласа хăварма хистет, çавăнпах *«хĕвелтухăç», «хĕвеланăç»* сăмахсене вакланине йышăнман. *«Хĕвел тухăç», «хĕвел анăç»* теес пулсассăн, *«кăнтăр-хĕвелтухăçне»* мĕнле çырмаллаха: *«кăнтăр-хĕвел-тухăçĕ»* темелле-и?

Чĕрчунсен «чĕрĕ чунсен» тĕнчипе тимлĕрех пулмаллаччĕ, уйрăм çырнă хăш-пĕр сăмаха халĕ ĕнтĕ вырăсла ăнлантарма тивет: ула такка – дятел, ула тăпа – горлица, вăрăм туна – комар, йĕке хӳре – крыса, тыр кас – суслик, йыт пулли – головастик. Кăнтăралла картикартипе вĕçекен *хуркайăк* – картишĕнче тайкаланса утакан *хур кайăк.* Н.И.Ашмарин «Карта-карти килет хуркайăк...» тени «15 том, 60 стр.» Библишĕн питĕ ырă, питĕ кăмăллă.

Уйрăм çырнă хăш-пĕр сăмах çинчен «сăмахран, хĕр ача, ар ача, хĕр арăм, ар çури, çара пакка сăмахсем çинчен» халăх хушшинче темĕнле анекдот та каласа култараççĕ. Пĕр анекдот çурални ман умрах пулса иртрĕ. Библири Левит кĕнекере мĕн çиме юранипе юраманнине çырса кăтартнă. Лев 11-29 *крот* текен чĕрчуна çиме хушмасть. Хамăр ялтан килнĕ пĕр хĕрарăма çав пуплеве вуласа патăм та, çĕнĕлле çырма сĕннĕ «кай ура» пирки «Ăнланмалла-и?» тесе ыйтрăм. – «Ма ăнланмалла мар? Ăнланмалла. Эп унччен пĕлмен, апла выльăхăн мал урине çиме юрать, кайри урине çиме юрамасть». Каюрана аса та илмерĕ.

Мф 23-24 Эсир *вăрăмтунана «вăрăм тунана»* сĕрсе хăваратăр, тĕвене çăтса яратăр.

Хăш-пĕр *ӳсентăран* «çĕнĕ правилăпа – *«ӳсен-тăран»*» ячĕсене пайланине те вырăнлă теме çук. Мĕншĕн-ха халăх мĕнле каланине шута илес мар, тахçанах пĕр пĕтĕм сăнар пулнă сăмахсене сыхласа хăварас мар? Çынсем темле те арпашăнаççĕ. Пĕри манран та ыйтнăччĕ иккĕленчĕк сасăпа: «*Панулми* поляксен улми теççĕ, чăнах та çапла-и?» – «Мĕншĕн çапла шутлатăр?» – «Ара, поляксем хăйсен арçыннисене «пан» теççĕ-çке...» Ĕнтĕ шалтах аптăрамалли çеç юлать... *Çĕрулми, панулми, çумкурăк, хуратул, хĕвелçаврăнăш, йытпырши, талпиçен, хурхуххи, утмăлтурат...* – кирлехчĕ-ши çак сăмахсене пайламашкăн? *«Çĕрулми», «панулми»* сăмахсене Ашмаринах пĕрле çырать «13 том, 90 стр.; 9 том, 90 стр.», çĕрулми мĕнне тата вырăсла та ăнлантарать – «картофель». Çак томсем 1935, 1937 çулта тухнине шута илсессĕн, çав сăмахсене эпир ĕмĕре яхăн пĕрле çыратпăр! Маларах та çапла пулнă-ха вăл.

Çĕнĕ словаре уçкаласа пăхсассăн, *тавра курăм, çур аки, ака пуç, суха пуç, аса илӳ, ат пăри, хурт пуççи, ал çыру* тенисене вуласассăн пуçа тĕлĕнмелле шухăш та пырса кĕрет: хăвăн ялапла кирек мĕн хăтлан та, çын ялапи «кунта çын ялапи çеç мар-ха, халăх мулĕ!» мĕнле çапла хуçаланас? Çынсем тарăхаççĕ те, ӳпкелешеççĕ те. Тăван яла кайсассăн «пирĕн енче чăвашла лайăх калаçаççĕ» ялан манран чĕлхе пирки ыйтаççĕ. Пирĕн ялта купăс калама ăста йăх пур – ватти те, вĕтти те купăс шăрантарать. Çавсенчен пĕри мана: «Мĕншĕн пирĕн купăса çапла мăшкăллаççĕ?» – терĕ. – «Мĕнле купăса? Кам мăшкăллать?» – *«Хуткупăса!* Халь ăна уйрăм çырмалла!» Эпĕ çакна ĕненме пултараймасăр этеме: «Мĕн каласан? Эсĕ çапла шăлйĕрен-и?» терĕм те, ешĕ: «*Шăлйĕрене* уйрăм çырмалла!» – терĕ. Чăтаймасăр, çынсем тĕрĕслеççĕ пулас. «Пĕлетĕр-и, – терĕ купăççă, – хуткупăса Ашмаринах пĕрле çырнă!» Тĕрĕс, 1941 çулта, 17-мĕш томра, 249-мĕш страницăра.

Чĕлхемĕр тĕлĕшшĕн пулса тухнă пăтранура «инкекре» самана айăпĕ те пур. Иртнĕ ĕмĕрти 90-мĕш çулсенче «шăпах çак çĕнĕ словаре хатĕрленĕ văхăтра» асар-писер пăтранатчĕç – пурте хĕвĕшеççĕ, васкаççĕ, шăв-шавра мĕнле те пулин çĕнĕлĕх туса ĕлкĕрмелле. Ун пек чухне «çиччĕ виç те пĕрре кас» тени пуçа та пырса кĕмест пулмалла. Çав хум пырса çапрĕ-ши пирĕн чĕлхене?

М.И.Скворцов хăйĕн словарĕнче пĕр тĕлĕнмелле илемлĕ тĕслĕх илсе кăтартнă: «чĕрçи тулли панулми». Çĕнĕ правило тăрăх «чĕр çи тулли пан улми» тесе çырсассăн ытарайми сăнарлăх сапаланса каять. Ун пек ан пултăрччĕ!

Кĕскетӳсем

Библири кĕнекесен ячĕсене кĕскетни

Пултарни – «Пулт»
Тухни – «Тух»
Левит – «Лев»
Йыша шутлани – «Йыш»
Саккуна астутарни – «Аст»
Соломон юррисен юррийĕн кĕнеки – «Юрă»
Исаия пророк кĕнеки – «Ис»
Израиль тӳрисен кĕнеки – «Тӳре»
Патшасен пĕрремĕш кĕнеки – «I Пат»
Патшасен иккĕмĕш кĕнеки – «II Пат»
Патшасен тăваттăмĕш кĕнеки – «4 Пат»
Çулсеренхи пĕрремĕш кĕнеке – «I Çул»
Çулсеренхи иккĕмĕш кĕнеке – «II Çул»
Неемия кĕнеки – «Неем»
Иов кĕнеки – «Иов»
Соломон ытарăшĕсен кĕнеки – «Ытар»
Псалтирь – «Пс»
Иеремия пророк кĕнеки – «Иер»
Иезекииль пророк кĕнеки – «Иез»
Даниил пророк кĕнеки – «Дан»
Осия пророк кĕнеки – «Ос»
Иона пророк кĕнеки – «Иона»
Захария пророк кĕнеки – «Зах»
Матфей çырнă Евангели – «Мф»
Апостолсен ĕçĕсем – «Ап ĕçс»
Сăваплă Иаков апостолăн мĕнпур ĕненекене янă çырăвĕ – «Иак»
Сăваплă Павел апостолăн Коринф çыннисене янă пĕрремĕш çырăвĕ – «I Кор»
Лука çырнă Евангели – «Лк»

Темтепĕр

● Аслă Британири Борнмут хулинче Поппи ятлă кушак пурăнать. Вăл тĕнчери чи ватă кушак шутланать. Çак чĕрчун ӳсĕмне çыннăнни çине куçарсан вăл 114 çулта пулать.

Нумаях пулмасть Поппи Гиннесс рекорчĕсен кĕнекине кĕнĕ. Рекордсмен титулĕ ăна Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенчи Пинки ятлă мăр-мăртан куçнă. Лешĕ пĕлтĕр 23 çула çитсе вилнĕ. Поппи тăватă кушакпа, икĕ кроликпа тата арланпа пĕрле пурăнать. «Манăн шухăшпа, вăл тĕрĕс диетăна пăхăнать, лара-тăра пĕлмест, – чĕрчунăн вăрăм ĕмĕрĕн вăрттăнлăхне уçать Поппи хуçи Джеки Вест. – Час-часах уçăлса çӳрет, нумай çиет. Поппи печени тата консерв юратать, чăх çунатне, шашлăк, ăшаланă çĕрулмипе пулă та тиркемест. Çапах та вăл нихăçан та мăнтăр пулман. Халĕ Поппин куçĕ те курмасть, хăлхи те илтмест, çапах та тепĕр кушак «асанне апачĕ» çине пăхсан ăна çыртса илме пултарать.

Факс: /8352/ 28-83-70
E-mail: hypar2008@rambler.ru
РЕКЛАМА
Адрес: 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13-мĕш çурт, 316-мĕш пӳлĕм
ПĔЛТЕРӲ
Тел.: /8352/ 28-83-70, /8352/ 56-20-07

Саламлатпăр

Хаклăран та хаклă çыннăмăра – Шупашкар районĕнчи Сарпаккассинче пурăнакан Валерий Филиппович ЕГОРОВА – сумлă юбилейпе, 70 çул тултарнă ятпа, ăшшăн саламлатпăр, ырлăх-сывлăх, çăлкуç пек тапакан вăйхал, телей, ăнăçу, вăрăм кун-çул сунатпăр.

Сума суса – хĕрĕсем Наташăпа Лена, кĕрӳшĕсем, мăнукĕсем Лизăпа Полина тата Гальăпа Женя Хрисановсем.

В соответствии с распоряжением администрации Порецкого района от 10.11.2014г. № 229-р Комитет по управлению муниципальным имуществом Порецкого района сообщает, что **23 декабря 2014 года** в 10 часов в здании администрации состоится аукцион по продаже земельного участка из земель сельскохозяйственного назначения с кадастровым номером 21:18:020601:287 площадью 5000 кв.м., расположенного по адресу: Чувашская Республика, Порецкий район, Кудеихинское сельское поселение, для ведения личного подсобного хозяйства.

Начальная цена земельного участка - **10000,00** рублей. Шаг аукциона - 5% от начальной цены- 500,00 рублей. Размер задатка - 20% от начальной цены - 2000,00 рублей.

Обременения (ограничения) использования земельного участка отсутствуют.

Организатор аукциона - Комитет по управлению муниципальным имуществом Порецкого района.

Условия аукциона:

Аукцион является открытым по составу участников и форме подачи заявок.

Дата начала приема заявок: 20 ноября 2014 года.

Дата окончания приема заявок: 18 декабря 2014 года.

Прием заявок и документов (с описью) для участия в аукционе осуществляется по рабочим дням в период срока приема заявок с 9.00 часов до 17.00 часов по адресу: Чувашская Республика, Порецкий район, с. Порецкое, ул. Ленина, д. 3 (отдел экономики, земельных и имущественных отношений администрации Порецкого района) или по федеральной почте (с описью вложения) по адресу: 429020, Чувашская Республика, Порецкий район, с. Порецкое, ул. Ленина, д.3. Справки (в том числе о форме заявки об участии в аукционе, о дате, времени и порядке осмотра земельного участка на местности) по телефону: 2-12-03.

Срок принятия решения об отказе в проведении аукциона - не позднее 15 дней до даты проведения аукциона.

Для участия в аукционе заявители представляют следующие документы:

- заявка на участие в аукционе по установленной форме с указанием реквизитов счета для возврата задатка;
- платежный документ с отметкой банка плательщика об исполнении, подтверждающий внесение задатка.

При подаче заявки физическое лицо предъявляет документ, удостоверяющий личность. В случае подачи заявки представителем претендента предъявляется доверенность.

Юридическое лицо дополнительно прилагает к заявке нотариально заверенные копии учредительных документов и свидетельства о государственной регистрации юридического лица, а также выписку из решения уполномоченного органа юридического лица о совершении сделки (если это необходимо в соответствии с учредительными документами претендента).

Перечень документов, предоставляемых претендентам для ознакомления:

- кадастровый паспорт земельного участка;
- отчет о рыночной стоимости земельного участка;
- проект договора купли-продажи земельного участка.

Порядок внесения задатка: до 18 декабря 2014 г. путем перечисления денежных средств в банк на расчетный счет № 40302810675170004003 в Чувашском отделении №8613 ОАО "Сбербанка России", БИК 049706609, ИНН 2113001841, КПП 211301001, ОКТМО 97635000, по коду бюджетной классификации 99311406013100000430, наименование получателя платежа: финансовый отдел администрации Порецкого района (Администрация Порецкого района, л/с 05133000022), назначение платежа: задаток для участия в аукционе по продаже земельного участка.

Определение участников аукциона состоится в отделе экономики, земельных и имущественных отношений администрации Порецкого района 19 декабря 2014 года в 10.00 часов.

Регистрация участников аукциона проводится в отделе экономики, земельных и имущественных отношений администрации Порецкого района 23 декабря 2014 года с 9.00 час. до 9.45 час.

Подведение итогов аукциона состоится в отделе экономики, земельных и имущественных отношений администрации Порецкого района 23 декабря 2014 года в 14.00 часов.

Порядок определения победителя аукциона - победителем признается лицо, предложившее наибольшую цену земельного участка.

Обязательства победителя аукциона:

- заключение договора купли-продажи земельного участка в течение 5 дней со дня проведения аукциона.

Администрация Новоахпердинского сельского поселения Батыревского района Чувашской Республики информирует заинтересованных лиц о приеме заявок от граждан и юридических лиц на предоставление земельного участка из земель сельскохозяйственного назначения для ведения сельскохозяйственного производства в долгосрочную аренду сроком на 49 лет с кадастровым номером 21:08:140401:291 площадью 62000 кв.м., местоположение: Чувашская Республика, Батыревский район, Новоахпердинское с/пос.

Заявки принимаются в течение месяца со дня опубликования в газете по адресу: 429353, Чувашская Республика, Батыревский район, с. Новое Ахпердино, ул. Ленина, д. 46. Справки по тел.: (83532)6-32-37.

Администрация Алгазинского сельского поселения Вурнарского района Чувашской Республики планирует предоставить в аренду земельные участки из земель сельскохозяйственного назначения сроком на 49 лет:

1) разрешенное использование: для сельскохозяйственного производства:

- кадастровый № 21:09:150201:523, общая площадь 823 844 кв.м., адрес: Чувашская Республика-Чувашия, р-н Вурнарский, с/пос Алгазинское;
- кадастровый № 21:09:150201:524, общая площадь 1 036 463 кв.м., адрес: Чувашская Республика-Чувашия, р-н Вурнарский, с/пос Алгазинское.

Администрация Чебоксарского района извещает о предполагаемом предоставлении в аренду сроком на 3 года земельного участка ориентировочной площадью 4,75 га, расположенного по адресу: Чебоксарский район, Вурман-Сюктерское сельское поселение, севернее свинофермы в направлении от ориентира: д. Микши-Энзей, ул. Ленина, д. 90 (земли сельскохозяйственного назначения), для выпаса скота и сенокошения. Заявления и письменные возражения принимаются по адресу: 429500, Чувашская Республика, Чебоксарский район, пос. Кугеси, ул. Шоссейная, д.15 (каб. №20). Телефон для справок (8-83540) 2-40-82.

Администрация Чебоксарского района извещает о намерении предоставления в собственность ранее арендованных земельных участков, расположенных по адресу: Чебоксарский район, Вурман-Сюктерское сельское поселения (земли сельскохозяйственного назначения), площадями:

- 18,0080 га с кадастровым номером 21:21:102305:128;
- 47,3661 га с кадастровым номером 21:21:000000:817;
- 10,8656 га с кадастровым номером 21:21:102302:59;
- 100,0931 га с кадастровым номером 21:21:102202:570,

для сельскохозяйственного производства. Заявления и письменные возражения принимаются по адресу: 429500, Чувашская Республика, Чебоксарский район, пос. Кугеси, ул. Шоссейная, д. 15 (каб.№20). Телефон для справок (8-83540) 2-40-82.

Комитет по управлению муниципальным имуществом Порецкого района информирует заинтересованных лиц о предстоящем предоставлении в долгосрочную аренду земельного участка из земель сельскохозяйственного назначения с кадастровым номером 21:18:120501:98 площадью 513000 кв.м., расположенного по адресу: Чувашская Республика, Порецкий район, Порецкое сельское поселение, для ведения сельскохозяйственного производства. Срок аренды 5 лет.

Преимущественным правом на заключение договора аренды вышеуказанного земельного участка обладает Крестьянское (фермерское) хозяйство Герасимова Владимира Евгеньевича.

Заявки принимаются в течение месяца по адресу: 429020, Чувашская Республика, Порецкий район, с. Порецкое, ул. Ленина, д.3. Справки по телефону: 8(83543)2-12-03.

Год культуры в РФ — Год культуры в Чувашии

зал Чувашской государственной филармонии

90-летию со дня основания Чувашского государственного академического ансамбля песни и танца посвящается:

1.ЮБИЛЕЙНЫЙ КОНЦЕРТ **12 декабря в 18-30**

2.Вокально-хореографическая композиция "ЮХАТЬ ЮХĂМ ШЫВ" Грант Главы Чувашской Республики **16 декабря в 14-00**

Справки по тел.: 62-14-83, 62-54-48.

ТĔРЛĔРЕН РАЗНОЕ

728. Утерянную зачетную книжку и студ. билет под № 113324, выданные Чебоксарским политехн. институтом /филиал/ Университета машиностроения /МГМОУ/ на имя П.Г.Долгова, считать недействительными.

Чăваш кĕнеке издательствин коллективĕ Чăваш Енĕн искусствăсен тава тивĕçлĕ ĕçченĕ, Чăваш Республикин К.Иванов ячĕллĕ Патшалăх премийĕн лауреачĕ, Чăваш комсомолĕн премийĕн лауреачĕ, издательство редакторĕнче, редакци заведующийĕнче нумай çул ĕçленĕ

Юрий Григорьевич АЙДАШ

вилнĕ пирки унăн тăванĕсемпе тата çывăх çыннисемпе пĕрле чĕререн хурланнине пĕлтерет.

«Хыпар» хаçатăн çитес номерĕ ноябрĕн 15-мĕшĕнче тухать.

чăваш халăх хаçачĕ
ХЫПАР
Учредительсем: Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕ, Чăваш Республикин Информаци политики тата массăллă коммуникацисен министерствин "Хыпар" Издательство çурчĕ" Чăваш Республикин хăй тытăмлă учрежденийĕ
Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен сферинчи надзор службин Чăваш Республикинчи управленийĕнче 2013 çулхи çу уйăхĕн 31-мĕшĕнче ПИ ТУ21-00281 №-пе регистрациленĕ
"Хыпар" индексĕ – 54800, "Хыпар"-шăматкун"– 78353

Директор-тĕп редактор В.В.ТУРКАЙ
РЕДКОЛЛЕГИ:
М.М.АРЛАНОВ /тĕп редактор заместителĕ-коммерци директорĕ/
Г.А.МАКСИМОВ /тĕп редактор заместителĕ/
С.Л.ПАВЛОВ /тĕп редактор заместителĕ/
Н.Г.СМИРНОВА /культурăпа чăваш диаспорин пайĕн редакторĕ/
В.В.ТУРКАЙ /директор-тĕп редактор/
Ф.П.ЧЕРНОВ /яваплă секретарь – техника центрĕн пуçлăхĕ/
Дежурнăй редактор В.И.СМИРНОВА

Редакципе издатель адресĕ: 428019, Шупашкар, Иван Яковлев проспекчĕ